Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 çентаберĕн 27
ытларикун
223 (5036) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Шупашкар, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 6—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци çекретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—6—65, йалхуçалăх пайĕн—4—57, советсен пайĕн—6—83, промышленнăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—3—36, дежурнăйĕн—6—23.

Чăваш парторганизацин облăçри XIX-мĕш конференцийĕ

Чăваш республикĕнчи болъшевиксен конференцийĕ

ПСК(б)П Чăваш организацин облăçри XIX-мĕш конференцийĕ пайанхипе ĕнтĕ тăваттăмĕш кун ĕçлет. Чăваш республикĕнчи болъшевиксем облăçри XVIII-мĕш парт-конференци иртнĕренпе пайанхи куна çити вăхăтра хăйсем туса пынă пысăк та хисеплĕ ĕçсен итогне тăваççĕ.

Совет çĕршывĕ, хăйĕн çулĕ çинчи мĕнпур тата пур тĕрлĕ тăшмансене те, фашисăмăн троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла агĕнчĕсене шăлса ыватса, кунран кун ÿссе, тĕрекленсе пырать. Крайсен, облăçсен, республикăсен сăн-сăпачĕ кунсеренех улшăнса çĕнелет, çĕнĕ хуласем, хапрăксемпе савăтсем шатса ÿсеççĕ, кивĕ хуласем те, хапрăксемпе савăтсем те реконструкциленеççĕ.

Совет çĕршывĕ малта пыракан промышленнăçлă, пĕтĕм тенчипе чи шултра йалхуçалăхлă, кулътурлă çĕршыв пулса тăчĕ.

Ĕлĕк пусмăрта пурăннă, патша саманин мăшкăлне тÿснĕ чăваш халăхĕ халĕ тăванлă республикăсен ретне тăрса, ирĕклĕ, кулътурлă пурнăçпа пурăнать. Орденлă Чăваш республикĕн промышленнăçĕ вăйлăн аталанса пырать, йалхуçалăхĕ пысăк тухăçлăхпа ĕçлет. „Чăваш АСС Республикĕнчи ĕççыннисем телейлĕ те хаваслă пурнăçа болъшевиксен партин ленинла-сталинла наци политикине пула турĕç, çакна вĕсем нихăçан та манас çук". (Облăçри XIX-мĕш конференци Сталин йулташ патне йанă саламлă çыруран).

Чăваш АСС Республикĕнчи болъшевиксем хăйсен XIX-мĕш парт-конференцине нихăçанхинчен те ытларах пĕрлĕхлĕ пулса тата ПСК(б) Партин ленинла-сталинла Тĕпкомĕ тавра нихăçанхинчен те çирĕпрех пĕтĕçнипе çитрĕç. ПСК(б)П Тĕпкомĕн февралъ-мартри тата йанварти Пленумĕсен решенийĕсемпе тата Сталин йулташ панă историлĕ кăтартусемпе хĕçпăшалланса, Чăваш облăç парторганизацийĕ фашисăмăн троцкисла-бухаринла, буржуала-националисла агĕнчĕсемпе вĕсене пулăшакансене аркатса тăкрĕ, партилĕ-советлă тата хуçалăхла ĕçсенче йертсе пыма ĕçре ситĕннĕ, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăракан çĕнĕ çынсене лартрĕ.

Çак çĕнĕ кадрсене ĕçре конкретлă пулăшса пырасси, тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерессишĕн, пытанса йулнă тăшмансене тепĕ-йĕрĕпех тăпăлтарса пĕтерессишĕн болъшевикла кĕрешÿ пуçарса йарасси, çапла майпа республикăна татах та пысăкрах ÿсĕмсем патне илсе пырасси—çакă пулăть ĕнтĕ ПСК(б)П Обкомĕн халиччен ĕçленĕ составĕн чи кирлĕ тĕп задачĕ.

Ку задача ПСК(б)П Обкомĕ çителĕклĕ таран пурнăçа кĕртсе пыман. Обком бÿровĕ парторганизацине политикалă тĕрĕс çулпа йертсе пырассине пурнăçа кĕртеймен. Çакă вăл, чи малтан, Обком руководствинче икĕ питлĕ çынсем ларнинчен, вĕсем политикăла тимсĕрлĕхле, идиотла чирпе чирленинчен килсе тухнă.

Конференцинче тухса калакан делегатсем ПСК(б)П Обкомĕн пĕрремĕш çекретарĕ пулнă Ивановăн пĕтĕм ирсĕр ĕçĕсен йĕрне уççăн палăртаççĕ. Иванов тăшмансене хÿтĕлесе тăнă, вĕсене наркоматсене тата ытти ответлă ĕçсене лартнă, вĕсене мухтаса авторитет туса пама хăтланнă, сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерессине çинчен ытларах сăмах çапнă, ĕçне туман, çапла майпа парторганизацине йăвăш çулпа йама тăрăшнă. Çак предател пĕтĕм контр-революцилĕ вăйсене хÿтлесе, пытарса усранă. Вăл работниксем çине кашкăрнă „сирĕн пуç та, хÿре те çук" тесе вĕсене намăслантарнă, самокритикăна хĕссе пынă.

Çак ирсĕр ĕçсене кура тăркачах Обкомăн иккĕмĕшпе виççĕмĕш çекретарĕсем, Дубăвпа Павлăв йулташсем, тата Обком бÿровĕн ытти членĕсем шăла çыртса, çăвара шыв сыпнă пек ларнă. Вĕсем Иванова тăрă шыв çине кăларса, ăна руководствăран сирпĕтес вырăнне, хăйсен шиклĕ чĕрисемпе ун умĕнче чĕтресе тăнă. Районри конференцисенче Обкома критиклессине сÿреклетме тăрăшнă, районри организацисене тăшмансенчен тасалма пулăшман. Халĕ те пулин вĕсем „епĕр айăплă, каçарăр" тесе иртерсе йама пăхаççĕ, хăйсен йăнăшĕсене тĕпĕ-йĕрĕпе уçса палăртмаççĕ.

Иванова ĕçрен кăлармала тата вăл партире тăрасси çинчен Парти Контролъ Комиççинче ыйту лартмала тунине конференци пĕтĕмĕшпех ырлать.

Конференци ПСК(б)П Обкомĕн иккĕмĕшпе виççĕмĕш çекретарĕсенчен, Дубăвпа Павлăв йулташсенчен, тата Обком бÿровен ытти членĕсенчен çирĕп ответ ыйтать.

Чăваш болъшевикĕсен умĕнче пысăк задачсем тăраççĕ. Облăçри XIX мĕш конференцин критикăпа самокритикăна анлăн сарса йарса, тăшмансене пĕр çын йулмиччен кăкласа ывăтмали, вĕсен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене татăклăнах тата пĕтĕмĕшпех пĕтермели çулсене палăртса хăвармала. Республикă промышленнăçне малашне те çĕклесе пыма, йалхуçалăхне татах та вăйлатса пыма, формипе нацилĕ, содержанипе социалисăмлă кулътурăна куллен-кун хăпартса пыма конкретлă кăтартусем парса хăвармала.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ тата Сталин йулташ пире хамăрăн халăха вăрçапа тапăнас хăрушлăх умĕнче мобилизацилĕ хатĕр тытса тăма, хамăрăн Хĕрлĕ Çара, Хĕрлĕ флота, Хĕрлĕ авиацине тата Осоавиахима вăйлатма хушаççĕ. Пирĕн кашни савăта, кашни хапрăка, кашни предприйатие социалисăмăн чăнчăн крепăçĕ туса хумала.

Пирĕн çĕнĕ кадрсене вĕрентсе ÿстерессин, ĕççыннисемшĕн сталинла тăрăшассин, вĕсен материаллă кулътурăлă пурнăçне çĕклессишĕн кĕрешессин образецне кăтартмала. Партилĕ пропагандăпа агитаци ĕçне вăйлатмала, ПСК(б) Парти историне таранăн вĕренме тĕплĕн хатĕрленмеле, 1938 çулти хуçалăхлă ĕçсене ăнăçлăн вĕçлемеле.

Паллах, Чăваш парторганизаци умĕнче таракан çак пысăк ĕçсене чăваш болъшевикĕсем ăнăçлăн пурнăçа кертĕç. ПСК(б)П Чăваш организацин облăçри XIX мĕш конференцийĕ вĕсене уçă кăтарту парса хăварĕ, ПСК(б)П Обкомĕн çĕнĕ составне Ленин—Сталин партийĕшĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлекен, ĕçре тĕрĕсленнĕ чи лайăх болъшевиксене, халăх тăшманĕсене пĕр шеллемесĕр тăпăлтарса пыма пултаракан, массăсене мобилизацилеме тата вĕсене коммунисăм патне малала илсе пыма пултаракан болъшевиксене суйласа хăварĕ.

ПСК(б)П Чăваш организацин облăçри XIX-мĕш конференцин дневникĕ

Çентаберĕн 25-мĕшĕнчи каçхи лару

ПСК(б)П Обкомĕпе ревизи комиççи отчочĕсем тăрăх тухса калакан йулташсем Обком ĕçне тата унăн çекретарĕсен ситменлĕхĕсене болъшевикла хĕрÿлĕхпе вăйлăн критиклеççĕ.

КРОВЙАКОВ йулташ (Вăрнар) суту-илÿ организацисенче сăтăрлă ĕçсене пĕтерессишĕн кĕрешессине йулашки вăхăтченех организацилемен, тет. 1937 çулта Вăрнар районĕнчи суту-илÿ организацисенче 200 пин тенкĕ ытла çаратса тата салатса пĕтернĕ. Ун пеккисем кăçал та пур. Чăваш потребсойузпа Чăвашторг районсенче сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерессинче пулăшса пымаççĕ. Магазинсенче час-часах чи кирлĕ таварсем пулмаççĕ.

Госбанк системи те пачах начар ĕçлет. Госбанкăн Чăваш кантурĕн управлъайушчийĕ ĕç укçи парассинчи ситменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе мерăсем йышăнмасть.

СМИРНОВ йулташ (Партколлеги) Обком бÿровĕ активпа ĕçлеменни, унтан хăрани çинчен каласа парать.

КРЫЛОВ делегат (Вăрнар) Обком руководствин пысăк ситменлĕхĕсене палăртать. Обком руководстви тимсĕрлĕхпе, идиотла чирпе чирленĕ. Çавăнпа тăшмансене тĕпĕ-йĕрĕпех тăпăлтарса пыма пултарайман.

Вăрнарти тата ытти парторганизацисен отчотпа суйлав пухăвĕсенче Спасăв шанчăксăрри çинчен, вăл Горький обкомĕн представителĕ пулса килсе, партипе совет организацисен республикăри руководствине тăшмансене лартса тухма пулăшни çинчен тĕрĕслесе тухма хушса решени йышăннă. Анчах парторганизацисен çав питех те кирлĕ решенийĕсене Обком руководстви тĕрĕслемен, кирлĕ мерăсем йышăнман. Обкомăн виççĕмĕш çекретарĕ Павлăв й. Вăрнар районĕнче чылай вăхăт райком çекретарĕ пулса ĕçленĕ пулин те, хăйпе пĕрле ĕçленĕ тăшмансене Афиногенăва тата Йетрухина тăрă шыв çине кăларма пулăшман.

Обком аппаратĕнче ĕçлеме работниксем суйласа илесси те тивĕçлипе пулса пыман, тет Крылов йулташ. Нумай йăнăшсем тунă, çавăнпа райком çекретарне суйланайман Колъцова Обкомăн йалхуçалăх пайĕн пуçлăхĕ туса хунă.

Крылов йулташ: Обком руководстви политикăла тĕрĕс çулпа йертсе пырассине пурнăçа кĕртме пултараймарĕ, тесе вывăд тăвать.

Тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерессине начар пынине палăртса, МОГУТИН йулташ (Шупашкар) хăшпĕр организацисенче сăтăрла ĕçсем таранланса пыни çинчен калать. Промсойуз пĕр мĕлйун тенкĕлĕх ытла продукци парса çитереймен. Растратăсем чакас вырăнне, нумайланса пыраççĕ. Обкомăн промышленнăçпа транспарт пайĕ нумай хутсем çырнă, анчах конкретлă ĕç туман. Айалтан панă лайăх сĕнÿсем папкăсенчех тăрса йулнă. Вăл пайăн пуçлăхĕ пулнă Поледанăв сăтăрçăсене тăрă шыв çине кăларассине вăраха тăсса пынă, хăйне урăх ĕçе куçарсанах—Обком йертсе пымасть, тесе кăшкăрма пуçланă.

КРЫЛОВ йулташ (Улатăр) Обкомăн иккĕмĕш çекретарне Дубăва вăл хăйĕн йăнăшĕсене тĕплĕн уçса палăртманшăн критиклет, Обком строителъства ĕçне начар йертсе пыни çинчен калать. Улатăрти гармонъ хапрăкне тăвасси вăраха кайнă пулин те, Обком руководстви тивĕçлĕ пулăшу паман. Хапрăк строителъствинчи ситменлĕхсене тĕрĕслеме тăшмансене йанă.

Унтан Крылов йулташ акă мĕн калать: И. Захарăв çинчен Обкома сахал мар пĕлтернĕ, анчах вăл мерăсем йышăнман. Обком директивĕсем районсене 20-шер кун хушши пыраççĕ.

МУРЗИН йулташ (Шупашкар) прокуратурăри хăру-тăрува йĕркене кĕртес тĕлĕшĕпе Обком руководстви сахал ĕçлени çинчен чарăнса тăрать. Вăхăтлăха республикă прокурорĕ пулса ĕçлекен Алексейĕв йертсе пыма пултараймасть. Вăл икĕпитленсе ĕçленĕ пирки, чылай пысăк ĕçсем вĕçне ситерейменсĕр çулталăк ытла выртаççĕ. Алексейĕв самокритикăна хĕсет, хăйне килĕшмен работниксене районсене ăсатать.

Обком çекретарĕ пулнă Иванов халăх тăшманне Соколъникăва мухтани çинчен чарăнса тăрать НИКИТИН йулташ (Шăхасан). Редакцисен работникĕсене пухса Иванов: „Соколъникăв хаçат редакцисенчен вунă хут лайăхрах ĕçлет" тесе, унтан пример илме хушнă.

Хăйĕн сăмахĕнче ТУГАРЕВ йулташ (Йĕпреç) буржуалă-националиса Гурйĕва тăрă шыв çине кăларса питлет, районри ситменлĕхсем çинчен чарăнса тăрать. Йĕпреç районĕнчи шкулсенче ачасем ура çинче тăрса вĕренни те пулнă, çавăн пек ситменлĕхсене пĕтерме Обком руководстви вăхăтра пулăшман.

Улатăрта 20 çул хушшинче те икĕ çурт кăна тунă. Мунча тума Халăх Комиссарĕсен Совечĕ укçа парать, анчах цемент памаççĕ. Çавăнпа строителъства ĕçĕ тивĕçлипе пымасть. Çакăн çинчен калать ПОРОÇЕНКАВ йулташ (Улатăр).

ТЕРЕНТЙЕВ йулташ (Йустици Халăх Комиссариачĕ) Обком судпа следстви органĕсемпе сахал ĕçлени, вăл планçăр ĕçлени çинчен тухса калать.

Обком çекретарĕ пулнă Иванов учрежденисен руководителĕсене хакламаннине, вĕсенчен ыйтмасăрах вĕсен заместителĕсене урăх ĕçе куçарни те пулни çине кăтартса парать хăйĕн сăмахĕнче МИТКОВ йулташ (Шупашкар). Унтан вăл Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçне критиклет. Халăх Комиссарĕсен Совечĕн кивĕ руководстви нумайрах ларусенче шавласа ларнă, комиççисем тата подкомиççисем туса ĕçлесе пынă. Конкретлă йертсе пыни пулман.

Хăйĕн сăмахĕнче БЕЛОРУССАВ йулташ (Канаш) вакунсем йусакан савăта тăвассинче Обком районри организацисене пулăшманни çинчен калать. Вакунсем йусакан савăт строителъствинче тăшмансем нумай пулнă. Райкомра та тăшман Григорйĕв ларнă. Обком çекретарĕ пулнă Иванов тата райком çекретарĕ пулнă Майорăв çав тăшмансенĕ хÿтлесе пурăннă. „Майорăв пирки ыйту" тăрсан, епĕ Обкомран мĕн тумали çинчен, хамăн малала мĕнле ĕçлемелли çинчен ыйтрăм. Мана вĕсем: ху пĕлсе ĕçле, тесе кăларса йачĕç",—каласа парать Белоруссăв йулташ.

Малала вăл Обком инструктăрĕсем ĕçре пулăшманни, Дубăв йăвашчунлă пулни, тата уйрăмăнах Н. М. Семенăв çинчен калать. Семенăв вакунсем йусакан савăтра партком çекретарĕн заместителĕ пулса ĕçленĕ вăхăтра Дулъчин тăшманпа çывăх пурăннă, ăна йăпăлтатнă, унпа пĕрле партком çекретарне Кудрйашова ĕçрен хĕссе кăларнă. Дулъчинран нумай укçа-тенкĕ тата сĕтел-пукансем илнĕ. Белоруссăв йулташ çак фактсене тĕрĕслесе, Н. М. Семенăв пирки ыйту лартма сĕнÿ парать.

НЕЙМАН (Шупашкар) тата МИДАКОВ (Çĕмĕрле) йулташсем Çутĕç Халăх Комиссариачĕ халăха çутта кăларас ĕçе начар йертсе пыни çинчен, сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе Харитонăв йулташ кирлĕ таран ĕçлеменни çинчен калаççĕ. Пединститутри ситменлĕхсене халĕ те пĕтермен. Халăх Комиссарĕсен Совечĕн кивĕ руководстви Çĕмĕрлери 700 ачана шкулсăр тăратса хăварнă.

АРТЕМЙЕВ йулташ (Шупашкар) уйрăмăнах Т. Васйлйĕв двурушник çинчен чарăнса тăрать. Çак икĕпитлĕ çын, хăйне тăшмансемпе кĕрешнĕ пек кăтартса, халиччченех пытанса пурăннă. Вăл партире тăрасси çинчен ыйту лартсан, виçĕ хут чĕнсе те пухăва пыман. Халĕ ăна пуçламĕш организаци партирен кăларнă.

Хула комитечĕн çекретарĕ пулнă Иванов инструктăрсене пухса пĕре те калаçман. Обком руководстви Обком членĕсене ĕçе сахал йавăçтарнă. „Епĕ Обком членĕ, анчах мана сахал ĕç хушнă, ĕçе мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслемен",—тет СОКОЛОВА йулташ (Шупашкар).

МИХАЙЛАВ йулташ (Йĕпреç) вăрлăх хуçалăхĕнчи сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес ĕç вăраххăн пынине палăртать. ПСК(б)П Обкомĕ парти вĕренĕвĕн кружокĕсене халĕ те программăсем йарса паманни çинчен калать.

Каçхи лару хупăнас умĕн СИВКИН (Шăмăршă) тата МАЗУРИН (Шупашкар) йулташсем тухса каларĕç. Мазурин йулташ Обком кадрсемпе йапăх ĕçленине палăртать. Халăх комиссарĕсем, райком çекретарĕсем çулталăкра 4—5 хут улшăнни те пулнă. „Кама ĕçе лартмаллине, кама ĕçрен кăлармаллине пĕлес пулать", тет Мазурин йулташ.

Çакăнпа каçхи лару хупăнать.

Çентаберĕн 26-мĕшĕнчи ирхи лару

ПСК(б)П Чăваш организацин облăçри XIX-мĕш конференцийĕн çентаберĕн 26-мĕшĕнчи ирхи ларăвĕнче Обком тата ревизи комиççи ĕçĕсем çинчен тунă докладсем тăрăх пренисем пычĕç. Делегатсем ПСК(б)П Обкомĕн, бÿро членĕсен, республикăри Халăх Комиссариачĕсемпе учрежденисене йертсе пыракансен ĕçĕсене болъшевикла критиклерĕç, ситменлĕхсене тупса палăртса, вĕсене пĕтермели майсене кăтартрĕç.

Комсомол Обком çекретарĕ И. НИКИФĂРĂВ йулташ халăх тăшманĕсем комсомолра тунă сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерессi мĕнле пыни çинчен калать. Халăх тăшманĕсем комсомол ретне ÿсме чарса пынă. 1931 çултанпа 1936 çула çитиччен комсомолăн Чăваш облăç организацийĕ çулран çулах чакса пынă. Троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла бандитсем рабочи, колхоз çамрăкĕсене Ленинла-Сталинла комсомола ретне кĕме пур майсемпе те чарса тăнă. Спасăвсемпе Матвейĕвсем ÿсе пыракан çамрăк ăру хушшинче ĕçлессине аркатас шутпа, пионерсен республикăри лагĕрне хупмала тунă, ăна укçа-тенкĕ паман.

И. Никифăрăв йулташ комсомол çар ĕçне вĕренесси тата оборонă ĕçĕсем кайа йулса пынине палăртать. Осоавиахим Тĕп Совечĕ, Г. О. Оçипăв йулташ Осоавиахим ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе питĕ начар ĕçлет. Оçипăв йулташ массăлă оборонă ĕçне организацилесси çине çаврăнса та пăхмасть. Оçипăв Осоавиахим Тĕп Совечĕн руководителĕ пулма пултараймасть, тесе калать Никифăрăв йулташ.

Малала Никифăрăв йулташ йалхуçалăхĕнчи, промышленнăçри стахановецсене комсомола илесси, комсомолецсене ПСК(б)П ретне илесси, вĕсене болъшевикла воспитани парасси çинче чарăнса тăчĕ.

АБАÇЕЙĔВ йулташ (Çар комиссариатĕнчен) массăлă оборонă ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе парти организацисен активлăн ĕçлеме кирли çинчен калать. Вăл хăйĕн сăмахĕнче оборонă ĕçĕ çине, уйрăмăн илсен, кăçалхи призыва иртересси çине ПСК(б)П Трак райкомĕпе унăн çекретарĕ Свешникăв йулташ çиелтен пăхнине критиклерĕ.

Обком отчотĕнче массăлă оборонă ĕçĕ çинчен, Осоавиахим Тĕп Совечĕн ситменлĕхĕсем çинчен нимĕн те каламанни — парти Обком оборонă ĕçне вăйлăлатас тĕлĕшпе начар ĕçленине кăтартать, тесе калать Абаçейĕв йулташ. Абаçейĕв йулташ та Г. О. Оçипăв Осоавиахим ĕçне организацилеме пултарайманнине кăтартса парать.

— ПСК(б)П Чăваш Обком бÿровĕ парти Тĕпкомĕн февралъ-мартри Пленумĕ тата çав пленумра Сталин йулташ панă кăтартусене пурнăçа кĕртеймен, тет В. ИГНАТЙЕВ йулташ (Шупашкар хули комитечĕ). Самаринăн партине хирĕçле ĕçĕсем çинчен калакан материалсем парти хула комитетĕнче пулнă. Анчах Обком тата хула комитечĕ çекретарĕнче пулнă двурушник, тăшмансемпе хутшăнса кайнă Иванов çак ĕçе путарса лартнă. Иванов халăх тăшманĕсене Елифанăвпа Филиппăва та хăйĕн çунатти айĕнче витсе усранă, вĕсене пур майсемпе те пулăшнă. Дубăв, Павлăв тата ытти йулташсем Ивановăн партине хирĕçле ĕçĕсем çинчен шарламасăр ларнă.

Игнатйĕв йулташ парти Обкомĕ пропагандăпа агитаци ĕçне вăйлатассишĕн тăрăшманнине, Дубăвпа Павлăв йулташсем çак ĕçĕн айккинче тăнине хытă критиклерĕ. Партилĕ пропагандă ĕçне тăшманла тата шанчăксăр çынсене шанса панă. Вĕсем çак ĕçре сăтăр туса пынă. Обкомăн партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕ, унăн заведуйушчийĕ Сергейĕв пропагандă ĕçне питĕ начар йертсе пырать. Пропагандиссен облăçри шкулĕнче вĕренÿ пахалăхĕ начар, уйрăмах парти историне çиелтен вĕрентеççĕ.

Игнатйĕв йулташ хыççăн, ПСК(б) Парти облăç комитечĕн пĕрремĕш çекретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. А. ВОЛКАВ йулташ тухса каларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче —троцкиссемпе бухаринĕцсем тата буржуалă-националиссем пĕр блок туса, партине, совет халăхне, социалисăм строителствине хирĕç мĕнле тискеррĕн кĕрешнине тĕплĕн кăтартса пачĕ. Волкăв йулташ парти Обкомĕн çекретарĕ пулнă Иванов тăшмансене хирĕç кĕрешме мар, вăл хăй вĕсемпе хутшăнса кайнине кăтартса пачĕ.

КАЛИНОВСКИЙ йулташ (Шупашкар) хăйĕн сăмахĕнче И. Козин, Ф. Смирнов тата Васйлйĕв парколлегинче ĕçленĕ чухне тăшмансене хÿтлесе пынине кăтартать. Вĕсем Йурйĕвăн, Токсинăн тăшманла ĕçĕсене тахçантанпах пĕлсе тăнă, анчах çав тăшмансен контрреволюцилĕ ĕçĕсене партирен, совет влаçĕн органĕсенчен пытарнă.

— Обкомăн йертсе пыракан парторганĕсен пайĕ, унăн заведуйушчийĕ Полтăн йулташ,—тет Калиновский йулташ,—партине илме панă зайавленисем тата партирен кăларнисен апеллйацисем çине чунсăр пăхать. Сорокин, В. Çтепанăв, Павлăв йулташсен ĕçĕсем 5—7 уйăх хушши Обкомра йăваланса выртаççĕ. Обком хăй тунă йăнăшсене те питĕ хуллен тÿрлетет.

САМСОНАВ йулташ (Çĕмĕрле районĕнчи „Комбинат" колхозран) Обкомра, Халăх Комиссариачĕсенче ларнă халăх тăшманĕсем тунă сăтăрла ĕçсем йалти коммуниссем умне пысăк йăвăрлăх кăларса тăратнине, çав сăтăрлă ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе Обком начар ĕçленине кăтартать. Епĕр,—тет вăл,—хамăр фермăра сăтăрла ĕçсем пурри çинчен Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, Тĕпĕçтăвкома пĕлтертĕмĕр, райкома кайса калорăмăр. Анчах Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче, Тĕпĕçтăвкомра ларнă халăх тăшманĕсем, райком çекретарĕ пулнă Ф. Çтепанăв ман ыйту çине çаврăнса та пăхмарĕç. Малала Самсонăв йулташ: Обком отчотĕнче вылъăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç, унти сăтăрлă ĕçсен йулашкисене пĕтересси мĕнле пыни çинчен нимĕн те каламанни Обкомăн пысăк ситменлĕхĕсене уççăн кăтартса парать, тет.

Самсонăв йулташ Тĕпĕçтăвком çекретарĕ пулнă Т. Васйлйĕвăн ирсĕр сăн-сăпачĕ, вăл граждан вăрçи вăхăтĕнче дезертир пулни, аçшĕ-амăшĕсене, хăйĕн тăванĕсене халĕ те колхоза кĕртмесĕр тытса тăни çинчен калать.

ЛАЗАРĔВ йулташ (Йĕтерне) Иванов Йĕтĕрнере ĕçленĕ чухне тăшмансемпе çыхăнса кайни, Волкăва, Лебедĕва райком бÿро членне кĕртсе, районра сăтăрлă ĕçсем туни çинчен калать. Вăл Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ сăтăрлă ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те туманни çине кăтартса, Обкомăн малашне çак ĕç çине хытă çаврăнса пăхмала, тет.

КУКЛИН йулташ (Тутаркас р.) Дубăвпа Павлăв йулташсене вĕсем Ивановăн партине хирĕçле ĕçĕсене кура тăркачах ăна хирĕç кĕрешменшĕн айăплать. Пирĕн,—тет вăл,—халăх хуçалăхĕн пур участкисенче те тăшмансем сăтăрлă ĕçсем тунă. Тăшмансен сăтăрлă ĕçĕсемпе кĕрешес ĕçре судпа следстви органĕсен пысăк вырăнта тăмала. Анчах судпа следстви органĕсем тăшмансене хирĕç хайаррăн кĕрешме мобилизациленмен. Вĕсем тăшмансене çийĕнчех тăрă шыв çине кăларса пĕтерес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Çакна республикăри прокуратурăри пысăк ситменлĕхсем лайăх кăтартса параççĕ. Куклин йулташ: парти Обкомĕ кулак ывăлне, политикăла йăнăшсем тунă Патейĕва республикăри прокурорăн аслă помошникне лартма сĕннине тĕрĕс мар, тесе шутлать. Малала вăл хатĕрлев организацисенчи тăшманла тата жуликла елементсене хăвăрт тасатасси çинчен чарăнса тăрать.

ЧАССР Финанс халăх комиссарĕ ИЕРОФЕЙĔВ йулташ Улатăр райком çекретарĕ пулнă Захарăв тăшмансене хÿтлени, республикă бÿджетне хуçалăхпа кулътура строителствине вăйлатмала мар шутпа тунине кăтартса парать. Çак ĕçшĕн государства план комиççи председателĕ Андрейĕв тата бÿджет комиççи председателĕ Д. Краснов йулташсем те айăплă. Вĕсем республикă бÿджетне йăнăш тума, дефицитлă тума пур майсемпе те пулăшнă, çакăншăн вĕсен ответ тытмала. Малала Иерофейĕв йулташ парти Обкомĕн финанс ыйтăвĕпе куллен ĕçлесе пыма кирлине кăтартать.

ВАЛЕЙЕВ (Шăнкăртам), ÇЕРЕБРЕННИКАВ (Партилĕ Контролъ Комиççийĕнчен), ВИСЛОБОКАВ (Улатăр) йулташсем парти Обкомĕн çекретарĕсен, бÿро членĕсен политикăлă пысăк йăнăшĕсене кăтартса пачĕç.

ЧАССР Верховнăй Совечĕн президиум председателĕ З. А. АНДРЕЙЕВА йулташ Тĕпĕçтăвком çекретарĕ пулнă Т. Васйлйĕв аппарата политикă тĕлĕшĕнчен шанчăксăр, йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлса кайнă çынсене илни çинчен каласа парать. Тĕпĕçтăвкомри пысăк ситменлĕхсемпе йăнăшсене палăртса куçласан, Иванов Т. Васйлйĕва Обком аппаратне илме тăрăшнă.

ЧАПРАЙĔВА йулташ (Шупашкар) тухса каланă хыççăн, конференци ирхи ларăвĕ хупăнчĕ.

Çентаберĕн 26-мĕшĕнче, каçхи ларура ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн отчочĕ тăрăх прени пычĕ. Пренире пурĕ 12 делегат: ВАÇИЛЙЕВ (Тăвай), АРЗАМАСЦЕВ (Комсомол Обкомĕ), ВОЛКАВ (Турхан), ВИШНЕВ (Патăрйел), ФИЛИППАВА (Куславкка), ТОЛСТОВ (Хĕрлĕ Чутай), ÇЕМЕНАВ („Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцийĕ), ÇЕМЕНАВ (Партии Обкомĕ) КОНСТАНТИНАВ (Елĕк), МИНЕЙЕВ (Улатăр), ПЕЛМАКОВ (Турхан), КОЛЪАКИН (Шалти ĕçсен Халăх комиссариачĕ) йулташсем тухса каларĕç.

Каçхи ларура конференцине Шупашкар хулинчи хапрăк-савăтсенчи рабочисем, инженерпа-техникла работниксем пырса саламларĕç.

Тăшмана кирек хăçан та çĕмĕрсе тăкма хатĕр

Çентаберĕн 24-мĕшĕнче Красноярскра Рабочисемпе Хресчексен Хĕрлĕ Çарне илнĕ çамрăк патриотсене çара чаплăн ăсатнă.

Митингра призывниксене парти, совет тата обшчĕствăлă организацисен представителĕсем саламланă. Призывниксен йăчĕпе стахановец Бесчастных йулташ сăмах каланă.

— Епĕр,—сталинла ăру, Октябр [illegible]ĕсем,—пайан Хĕрлĕ Çара кайатпăр. Пирĕн тăван çĕршывăн таса чиккисене пăсма хăйакан кирек мĕнле тăшмана та епĕр кирек хăçан та çĕмĕрсе тăкма хатĕр. Совет влаçĕ вăл— халăхсен телейĕ, халăхсен телейĕшĕн епĕр хамăр пурнăça та пама хатĕр,—тенĕ вăл.

Обшчĕствăлă организацисен представителĕсем призывниксене нумай парнесем панă.

(ТАСС).

Кĕскен

** Граждăнла сывлăш флочĕн пĕрремĕш класлă пилочĕ Никифăрăв йулташ çентаберĕн 21-мĕшĕнче Ленинград—Мускав маршрутпа çĕнĕрен чаплă вĕçев тунă. Хăвăрт вĕçекен „ПС-40" почтă самолочĕ вăл Ленинградпа Мускав хушшинчи çула 1 сехет те 44 минутра вĕçсе тухнă. Самолот бортĕ çинче 603 килограм груз пулнă.

** Казахстан йалĕсемпе аулĕсенче халъхи вăхăтра кулътурă çурчĕсем тата районри клубсем 147, вулав çурчĕсем—2.276, библиотекăсем—288, музейсем—20 шутланаççĕ. 1936 çулта кулътçут учрежденисем валъли 6 мĕлйун тенкĕ панă пулсан, 1938 çулта 17 мĕлйун тенкĕ панă.

(ТАСС).

Пахча-çимĕçсене сыхласа усрасси

Пахча çимĕçсене хĕл вăхăтĕнче сыхласа усрасси пысăк ĕç пулса тăрать. Пахча-çимĕçсене лайăх пăхса усраман пирки, вĕсем тĕрлĕ чирсемпе чирлесе çĕрсе пĕтеççĕ. Подвалсенче пахча-çимĕçсене нумай вăхăт усрани, ытлашши нӳрлĕ сывлăш пулни, вентиляци трубисем сывлăша çителĕксĕр улăштарса, ытлашши сивĕ йе ăшă пулни те çимĕçсене часах çĕртет.

Усрама хăварнă пахча-çимĕçсен пахалăхĕ çимĕçе мĕн вăхăтра пуçтарнинчен те килет. Пулса çитеймен йе ытлашши пулса кайнă çимĕçе усрама хĕнтерех, мĕншĕн тесен вăл часах чирлесе çĕрме пултарать. Çавăнпа та çимĕçсене вăхăтра уйăр çанталăкра, шăнсем пуçланиччен пуçтармала.

Пахча-çимĕçсене пуçтарнă чухне, чирлисене суйласа уйрăм пуçтармала, çимĕçсене сӳранлатма кирлĕ мар, мĕншĕн тесен суранланнă вырăнсене чирсем часах лекеççĕ. Çавăнпа та хĕлле вăльĕи таса çимĕçсене çеç хăвармала.

Пахча-çимĕçсене усранă чухне йĕпе çĕрĕк, типĕ çĕрĕк тата çимĕçсем кавакарнипе ытларах чирлеççĕ. Йĕпе çĕрĕк чирĕпе чирленĕ çимĕçсем часах йĕпенсе кайаççĕ те çĕреççĕ. Типĕ çĕрĕк чирĕпе чирленĕ çимĕçсем пĕрĕнсе лараççĕ, вара часах хытса кайаççĕ.

Çимĕçсем час-часах тĕрлĕрен йапаласемпе çийелтен витĕнеççĕ, кăмсăкланаççĕ. Ун пек кăмсăкланнă çимĕç варахăн çĕрме тытăнать. Кăмсăкланни кăшман, çĕрулми тата сухан çинче ытларах пулать.

Хашпĕр суртлă пахча-çимĕçсем чирсемпе чирлесе ытлашши çĕрмеççĕ, çавăнпа та усрама хăварнă чухне пахча-çимĕçе мĕн вăхăтра тата мĕнле сурт пулнине асра тытмала.

Çавăнпа та пахча-çимĕçсем подвалсенче усранă чухне çĕрни, вĕсен пахалăхĕнчен, суртран тата мĕнле условипе сыхласа усранинчен килет.

Пахча-çимĕçсене усрама хурасчен çимĕçсем çĕресрен чи малтанах подвалсене çӳп-çапсенчен тасатмала, ăшчиккине лайăх типĕтмеле, ун хыççăн дезинфекци тумала.

Çимĕçсене йапаласемпе тыткаланă чухне тĕрлĕ чир йересрен, тыткăли йапаласене (турттармали, пухмали тата ытти те) формалин шывĕпе дезинфекцилемеле. Дезинфекци тумали шыва çапла хатĕрлеççĕ: 40 процентлă пĕр пай формалина 100 пай шыв çине йарса хутăштармала.

Çимĕçсене пăхса усрасси вĕсене мĕнле усрама хунинчен те килет. Пахча-çимĕçсене купаласа усрас пулсан, купа сӳлĕшĕ 1—1,5 метртан ытла пулмала мар, мĕншĕн тесен хулăм купаласан, айалти çимĕçсем пăсăлма пултараççĕ. Йепе çанталăкра тата нӳрĕ вырăнсенчен пуçтарнă çимĕçсене хунă чухне купан сӳлĕшĕ 0,5—0,75 метр çеç пулмала.

Кишĕр, хĕрлĕ кăшман, петрушкă çимĕçсене шаршанланă чух çимĕçсем шанса кайасран вĕсен хушшине нӳретнĕ хăйăра сийĕн-сийĕн сапаламала. Шанса йе йĕпенсе кайнă тымар-çимĕç часах чирлеме пултарать. Çимĕçсем йĕпенесрен извĕçпе йе кĕле хăйăрпа хутăштарса сапала пулать. Ун пек чухне пĕр пай кĕл çине 9 пай хăйăр хутăштармала. Çĕрулми йĕпенесрен ăна типĕ торфпа хутăштарма пулать.

Çимĕçсем хуракан подвалти сывлăш çĕрулмишен 1—3 градус ăшă, купăсташăн 0—0,5 градус сивĕ, сухăн вальĕи 0—2 градус ăшă кирлĕ, нӳрĕ 75—85 процентран мала пулмала мар.

Подвалти ытлашши нӳрлĕ сывлăша чакарас тесен, извĕç йе тăвара уйрăм хăма çине сарса хумала. Весем сывлăшри ытлашши нӳре туртса илеççĕ.

Пахча-çимĕçсене подвалсене хывсанах вентиляци трубисене уçса уçăлтармала, мĕншĕн тесен вăл вăхăтра ăшă тата нӳрĕ ытлашши хăпарса кайма пултарать.

Хранилищăри температурăна асăрхаса тăма термометр пулмала. Чирлеме пуçланă çимĕçсене вăхăтра суйласа илмеле.

Вăрлăхлăх хăварнă тымар-çимĕçсем чирлесрен, вĕсене извĕçпе тата кукерт тусанĕпе сапмала. Çĕрулмисене суйланă чухне тата вĕсене пушатнă чухне пăрахса йе вĕсем çийĕн утса çӳрсе амантма йурамасть. Аманнă çĕрулми йе ытти çимĕçсем те часах çĕреççĕ.

Агроном Н. Кондаков.

Суртлă çĕрулми çинчен

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ кăçалхи мартăн 19-мĕшĕнче „1938 çулта çĕрулми тухăçне ӳстерес тĕлĕшпе тумали ĕçсем çинчен" постановлени йышăннă. Çав постановлени тăрăх, крахмалпа паткă тăвакан промышлĕннăçлă вырăнсенче обйазатĕлства тăрăх памали суртлă çĕрулми хакĕ çумне хушса параççĕ.

Заготовкă шучĕпе памали хак çумне пĕррĕмĕш категоришĕн 10 процент, иккĕмĕш категоришĕн 5 процент, сутăн илмели çумне пĕррĕмĕш категоришĕн 5 процент, иккĕмĕш категоришĕн 3 процент хушса параççĕ. Пирĕн республикăра „Вольтман", „Силезия", „Ранняя роза", „Эпикур", „Лорх" суртлă çĕрулмишĕн хушса параççĕ.

Çавăнпа та колхозсен тата колхозниксен государствăна суртлă çĕрулми панăшăн надбавка илес тесен, çĕрулми мĕнле çурт пулнине пĕлтерекен свидетĕлствăсене çĕрулмисемпе пĕрле илсе пымала. Вара тин çĕрулми хакĕ çумне хушса укçа параççĕ.

Çитес çулта лартмали вăрлăхлăх çĕрулмисене те халех, уйрăмăн хатĕрлесе хумала. Лартма уйăрса хăварнă чухне, çитес çулта пĕтĕмпех суртлă çĕрулми лартса хăварассине асра тытмала.

И. Степанăв.

Колхозсенчи кулътурă çурчĕсем

Çак кунсенче çеç Ишлей районĕнчи „Шупуç" колхоз çĕнĕрен пысăк клуб лартрĕ. Клубра хаçат-журналсем, шашкă-шахмăтсем тата ытти те пур.

Çавăн пекех Чакăнар йалсоветне кĕрекен „Ырашпулăх" колхозра вулав çурчĕ лартаççĕ.

Л. Петров.

Иван Малгай

КОМПОЗИТĂР

Таса çăлтăр йевĕрлĕ кусĕ тăптăрă,
Йанрать аллинче ун вĕр-çĕнĕ гитарă.
Тин пиçнĕ çырла пек тулли пичĕсем,
Сиксе çеç тăраççĕ йăштак пӳрнисем.
Ташла пултарулăн, вăр-вар шăвса саврăн.
Йурла, савнă тусăм, ес те пĕрер саврăм.
Хĕр саншăн выльать ытарми çемĕсем,
Хĕр саншăн выльать тĕрлĕрен йурăсем.
Вăл çырнă тем чухлĕ хитре çĕнĕ йурă,
Кашни йурринех çеммисем унăн урăх.
Кашни йурринче çут хавас йалкăшать.
Кашни йурринех хăпартать шухăша.
Хĕвеллĕ çут ирĕк курнать йурă урлă,
Кунта тупас çук ес кичемлĕх те хурлăх.
Илемлĕ картинă кăна умăнта,
Ку йурра итлесе савăнатăн кунта.
Ак, тухрĕ лаша çавăтса çамрăк каччă,
Лашин урисем выльаса çеç тăраççĕ.
Колхоз хĕрĕсем туллийех урамра:
Хăйсен тантăшне ăсатаççĕ çара.
Лаша çине каччă утланчĕ те ларчĕ,
Урам тăршшипе сиккипе вăркăнтарчĕ.
Хăй пăхса çитĕнтерне ăна тыхаран,
Пайан уйăрлать те кайать вăл çара.
Вĕçет урам тăрăх, вĕçет пӳртсен çумĕн,
Чуппи вăйланать, малала кайнă çемĕн.
Пӳртсен илемне кӳрекен чечексем
Йулаççĕ унтан, палăрмасăр иртсе.
Ăна колхозра хисеплет пĕтĕм халăх,
Ăна комсомол çитĕнтернĕ вăйхаллă,
Вăл хĕрсе ĕçлеме пуçлани конюхра
Кăçал кĕркунне пилĕк çул тултарать.
Ăна мухтаса хĕр йурлат те хастарран,
Йанрать аллинче ун вĕр-çĕнĕ гитарă,
Ку хĕр композитăр, пурнать колхозра,
Йурлать чи телейлĕ тулли пурнăçра,
Ак, каччă килет кайала урам тăрăх,
Лашине тепĕр хут урипе тапăрларĕ.
Сас-чĕвĕ тăрать йурă урлă умрах,
Мĕнчул саламсем ыткăнаç урамра.
Шăп пулчĕ гитарă, самантлăх лăпланчĕ,
Колхоз килкарти патĕнче лаша тăчĕ.
Çемçен лăпкаса пуçĕнчен лашана
Ăчашларĕ те каччă, пуçларă самах:
Кайатăп çара еп, чипер, çывă йулăр,
Чипер, сывă йулăр, йалан сывă пулăр.
Ĕçир ан шикленĕр тăшман килесрен,
Епир кĕртес çук вĕсене чикĕрен.
Вăрçасшăн пулсассăн, епир вăрçа хатĕр,
Пуçа шеллемесĕр вута та кĕретпĕр.
Пире Ворошилăв чĕнсен тăвăла,
Унта ман йуратнă лашам та пулать...
Йăштак пӳрнесем хĕлĕхсем çине куçрĕç,
Гитарă хускалчĕ, каллех йурă тăсрĕ,
Кĕвви йевĕрлех сăмахсем те аван,
Вĕсене итлесе савăнса çеç тăран.

1938 ç.

Укçа-тенкĕ пухас ĕçе хăвăртлатмала

ЙĔПРЕÇ. Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх пĕррĕмĕш çулхи кăларăм займ укçине пухасси сӳрĕккĕн пырать. Виççĕмĕш квартăл заданине рабочисемпе служăщисем йĕнĕпе 54 процент, колхозниксемпе йединоличниксем—63 процент çеç тултарнă. Перекет кассипе райфинпайĕ займ укçи пухассине начар организацилĕнĕ. Займ укçи пухас ĕçе йал активне, займ уполномоченнăйсене, финанс çекцисене анлăн йавăçтарман. Хăшпĕр йалсоветсем займ ĕçĕпе пачах та ĕçлемеççĕ. Займ уполномоченнăйĕсем, финанс çекцисем займ сарас кампани пынă вăхăтра ĕçлерĕç те кайран лăпланса ларчĕç, укçине пухассипе ĕçлемеççĕ. Займ ĕçне те пĕтĕмпех налог агенчĕсем çине йăвантарнă. Колхоз правленисем займ ĕçĕпе пачах та интересленмеççĕ.

Хурамал йалсоветĕнче (председателĕ Дуткин) 3385 тенкĕлĕх займ сарнă та укçине пĕр пус та пухман. Çавăн пекех Шăртанра (председателĕ Çеменăв) 3665 тенкĕлĕх, Хумри Выçлире—2955 тенкĕлĕх, Чурачăкра 5580 тенкĕлĕх сарнă та укçине пухман. Райфинпайĕпе перекет кассинче ĕçлекенсем асăннă йалсоветсенче займ укçи пĕр пус та пухăнманнине лайăх пĕлеççĕ, анчах, вăл йалсоветсенче займ укçине пухассине вăйлатас тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Çав вăхăтрах займ укçине пухассипе кăтартуллă ĕçлекен йалсоветсем те пур. „Коçтор" тата Крупскайа йачĕпе тăракан колхозсем займ укçине пĕтĕмпех тӳлесе татнă.

Йединоличниксем хушшинче займ укçине пухассипе Йĕпреç поçолăк советĕнче (председателĕ Лешчов) лайăх ĕçлеççĕ. Ку йалсоветра займ уполномоченнăйсем Ахлатовскайапа Лешчовă ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Лешчовă йултăш хăй участкинче займ укçине икĕ ерне хушшинче пухса пĕтерне. Вĕсем йединоличниксен килĕсене çӳресе займ укçине тӳлесси çинчен ăнлантараççĕ. Çапла ĕçленипе Йĕпреç поçолăк совечĕ çентăберĕн 20-мĕш тĕлне йединоличниксем хушшинче займ укçине 1370 тенкĕ пухса (1800 тенкĕлĕх çыраннă), йулашкине октăберĕн 1-мĕшне пухса пĕтерессишĕн кĕрешеççĕ.

Д. Михайлăв.
Г. Марушĕв.

Çĕнĕ шкул

Липăвкă (Турхан р.) йалсоветне кĕрекен Ульйанăвскă йалĕнче кăçалччен шкул пулман. Йалсовет тăрăшнипе кăçалхи çĕнĕ вĕренӳ çулĕ тĕлне йалта пуçламĕш шкулпа туллимар вăтам шкул уçрĕç.

Ив. Архипăв.

Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăрту

Çĕршыври предприйатисенче Октăбĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăрту кунран-кун сарăлса пырать. Мускаври Сталин йачĕпе тăракан автосавăтри тимĕрçри бригадăсем хушшинче ăмăрту пысăк çĕкленӳпе иртсе пырать. Штамповщиксен бригадисенчен нумайăшĕ халиччен пулман ĕç тухăçлăхĕ параççĕ. Комсомолец-штамповщик Романенко йултăшăн бригади çентăберĕн 22-мĕшĕнче пĕр сменăра нормă тăрăх 1.150 шатун штамплас вырăнне 2.880 шатун штампланă. Штамповщик Петровский йултăш бригади çав кун нормăна икĕ хута йахăн тултарнă.

Мускаври Серго Орджоникидзе йачĕпе тăракан станоксем тăвакан савăтăн иккĕмĕш механически цехĕнче наладчицă Свисткова йултăш бригади нормăна 130—140 процент тултарать. Револьверщицă Левинă йултăш икшер нормă ытла тултарать.

Октăбĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăрту Калининскри тата Вышне-Волоцкри пир-авăр хапрăкĕсенче анлăн сарăлса пырать.

Париж Коммунĕ йачĕпе тăракан хапрăкри паллă ткачихăсем—Орловă тата Голубĕвă йултăшсем туллин ĕçлемели ĕçе куçнă. Каганович йачĕпе тăракан хапрăкри ватерщицăсем Чайникăвă, Григорйĕвă тата Мажайĕвă йултăшсем хăйсен нормисене кашни кунах 150-шар процент тултараççĕ.

„Пролетарка" йатлă пир-авăр хапрăкĕн коллективĕ планран иртерсе 64.920 метр пир-авăр панă.

(ТАСС).

Ăмăртăва сарса пыраççĕ

Шупашкарти строителствăри рабочисем Октăбĕр уйавне хатĕрленнĕ май ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тăваççĕ. Çентăберĕн 19-мĕшĕнче шашкă татнă çĕрте ĕçлекен Шумилăв йултăш бригади нормăна 260 процент тултарнă. Çак кунхи ĕçукçи кашнин 20 тенкĕ те 25 пус шутланать.

Матвейĕв, Çеменăв, Климăв, Сумзин йултăшсен бригадисем те йулашки кунсенче икшер нормă тултарса ĕçлеме пуçларĕç. Матвейĕв йултăш бригади кашни кунах 200—254 процентшар тултарса пырать.

В. Дмитрийĕв.

Çăкăр савăтĕнчи стаханăвĕцсем

Шупашкарти çăкăр савăчĕ кашни кун 20—25 тоннă çăкăр пĕçерсе кăларать. Унта 150 çынна йахăн ĕçлеççĕ. Рабочисем хушшинче стаханăвла ĕçлекенсем те сахал мар. Акă, стаханăвĕц Тараскин йултăш. Нормă тăрăх унăн çăкăр сехет хушшинче хăйĕн подручнăй рабочипе 600 килограм çăкăр пĕçерсе кăлармала. Çак нормă пысăк пек туйăнать. Анчах Тараскин йултăшăн вăл нормă пĕчĕк. Тараскин кашни сменăрах хăйĕн нормине икĕ хут ытла тултарса пырать. Çентăберĕн 3-мĕшĕнче вăл сменăра 1284 килограм, çентăберĕн 4-мĕшĕнче 1275 килограм, çентăберĕн 5-мĕшĕнче 1264 килограм çăкăр пĕçерсе кăларнă. Çентăберĕн 9-мĕшĕнче 1950 килограм кăларса виçĕ нормă ытла тултарнă.

Краснов йултăш та Тараскинран йулмасть. Вăл та икшер нормă ытла тултарса пырать. Александрăв, Попов, Морозăв, Кириллăв, Мальаков, Васильйĕвă йултăшсем те нормăсене икшер хут ытла тултарса пыраççĕ. Тата вĕсем çăкăра лайăх пĕçерсе кăлараççĕ. Брак тумаççĕ.

Стаханăвла ĕçленипе нормăна 200 процент ытла тултаракансем уйăхра 500—600 тенкĕрен кайа мар ĕçлесе илеççĕ.

М. Н. Данилăв-Чалдун.

Ăмăртса ĕçлени пулăшрĕ

Хаçат-журнал сарас плана Орпашри (Тутаркас р.) почтă уйрăмĕ ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать. Почтă уйрăмĕн, районран панă план тăрăх, 1938 çулшăн тĕрлĕрен хаçат-журналсем 16.670 тенкĕлĕх сармала пулнă пулсан, çентăберĕн 22-мĕшне 15.959 тенкĕлĕх сарса, плана 95,7 процент тултарнă.

Хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе почтальйонсем пĕр-пĕрипе социалисăмлă ăмăртăва анлăн хутшăннă. Ăмăртса ĕçленипе А. Петровă почтальйон плана 380 процент тултарчĕ. Çырăннă хаçат-журналсене подписчиксем патне вăхăтра çитерет. Çавăн пекех Иефремăв почтальйон 114 процент, А. Петров — 123, Алексейĕв 97 процент тултарнă.

Почтальйонсен ĕçне почтă уйрăмĕн начальникĕ Йерамăв йултăш куллен тĕрĕслет, ĕçре пулăшать.

Çакăн пек ăмăртса ĕçленипе Орпашри почтă уйрăмĕ хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе районра пĕррĕмĕш вырăна тухрĕ.

Г. Подьаков.

Чукун çула туса пĕтериччченех ĕçлетпĕр

Трак районĕнчи хăшпĕр колхозниксем чукунçул строителствинчи стаханăвла çирĕмкунлăха хутшăнса, тимлĕн ĕçлесе пыраççĕ. Мартынкинăри „Красный восток", Мăн Шетмĕ йалсоветĕнчи „Красный Порденер" колхозсем çирĕмкунлăха хутшăнса чукунçула пĕтĕмпех туса пĕтерсе експлоатацине йаричченех ĕçлеме пулаççĕ.

Районсем ĕç вăйĕ çителĕксĕр параççĕ

ПСК(б) Парти Чăваш Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени тăрăх чукунçула октăберĕн 1-мĕшне вăхăтлăх експлоатацине парас тĕлĕшпе иртерекен стаханăвла çирĕмкунлăх хушшинче кашни кун строителствăра ĕç вăйĕ 3.350 çынтан кайа мар пулмала. Анчах чылай районсем ĕç вăйĕ парассипе пайан кун та чăтма çук йапăх ĕçлеççĕ. Çентăберĕн 25-мĕшĕнче строителствăра пĕтĕмпе те 1928 çын кăна ĕçленĕ. Çав кун вĕсем 35.400 тенкĕлĕх ĕç тунă.

Уйрăмăнах ĕç вăйĕ парассипе Канаш, Трак, Çĕрпӳ, Ишлей, Шăхасан, Шупашкар районĕсем йапăх ĕçлеççĕ. Акă Канаш районĕнчен 550 çын ĕçлемеле пулсан, çентăберĕн 25-мĕшĕнче пĕтĕмпе те 6 çын çеç ĕçленĕ. Ытти кунсенче те çавăн пекех.

Шупашкар районĕнчен 680 çын суран 200 çын лашапа ĕçлемеле, ĕçленĕ—216 çын суран, 38 çын лашапа çеç. Ишлей районĕнчен те 121 çын кăна ĕçленĕ.

Райĕçтăвкомсемпе парти райкомĕсен строителствăна ĕç вăйĕ парассипе куллен ĕçлени кирлĕ. Анчах пайанхи куна вăл курăнмасть-ха.

Ĕнерхи йединоличник

Хăй мĕнле çынне, хăй кам иккенне темĕнле писателĕрен та лайăхрах, çыпăçуллăрах каласа парать хĕрĕх икĕ çулхи Илле Мостарăв. Хăй тата унăн тантăшĕсем калачă тăрăх, çамрăклах вăл хăйсен йалĕнчи (Хурамакасси, Ишлей р.) платниксемпе йавăçнă. Йалтан йала пурасем пураса çӳренĕ. Çĕнĕ çуртсем тунă. Кивисене сипленĕ.

Малтанах платниксем Иллене çав тери йуратнă. Унăн ку ĕçри пултарулăхне туйнă вĕсем. Пысăк маçтăр пуласса шаннă. Анчах Иллен хăй пăхăнса тăракан платниксен умĕнче пĕр пысăк çитменлĕх пулнă. Илле... ерех ĕçмен.

— Мĕншĕн капла?—тенĕ ăна, каççеренех ыйăнна хыççăн кăшт „сыпма" йуратакан платниксем.— Мĕншĕн пайа кĕместĕн?

Илле хирĕç чĕнмен. Ывăнна çансурăма ерехпе „тӳрлетесшĕн" пулман вăл. Сĕтеклĕ апат-çимĕç тата каçхи тутлă канăçлăхсăр пуçне ывăннине иртерме урăх нимех те кирлĕ мар иккене çамрăклах чухласа илнĕ. Платниксенчен чылайĕшĕ унпала килĕшмен. Илле хирĕçмен. „Пайа кĕртес" тесе кунĕн-çĕрĕн йатлаçакан çынсенчен уйрăлнă. Урăх çынсемпе çамрăксемпе ĕçлеме пуçланă. Платник ĕçне вĕрентнĕ вăл вĕсене. Хăй те вĕреннĕ.

Часах Илле Мостарăв таврара паллă платник пулса тăнă. Кашни çĕнĕ çурт лартакан çын ăна ĕçе илсе кайнă. Унăн ĕçне пӳр йенченпур йенчен те пахаласа мухтанă.

Платник ĕçне тĕплĕн пĕлнипе çеç Мостарăвăн чунĕ канма пултарайман. Урăх ĕçсене, строителствăра кирлĕ ĕçсен майĕсене те алла çавăрса илесшĕн тăрăшнă вăл.

Пĕррехинче çапла Мостарăв хăйне вальли пĕр пĕчĕкçĕ пӳрт лартнă. Çĕнĕ пӳрт кăмакине тума 12 çухрăмри йалта пурăнакан маçтăра чĕнсе илнĕ. Маçтăр пĕчĕк пӳртĕн пĕчĕк кăмакине тăватă кун хушши тунă. Унпа пĕрлех Мостарăв хăй те ĕçленĕ: кирпĕч çĕкленĕ вăл, тăм çăрса хатĕрленĕ. Кăмака хатĕр. Ăна хутнă. Хутнă та, пĕтĕм çемйе чыхăна-чыхăна тула тухса тарнă. Пӳрт ăшне сĕрĕм йăсăрланса тулнă.

— Мĕн тумала? Мĕскершĕн капла ку?

Ку ыйту çине ответ паракан пулман. Кăмака тăвакан „маçтăр" паçăрах, ĕçшĕн укçа çавăрса чикнĕ хыççăнах, куç умĕнчен çухалнă.

Ăнăçсăр кăмакана хăвăрттăнах сӳтсе пăрахнă Мостарăв. Хăй пĕлнĕ пек çĕнĕрен купаланă. Кăмака ăнăçлă пулнă. Çакăнтан кайран вăл ытти çынсен пӳрчĕсем вальли те сахал мар кăмака тăва-тăва панă. Часах Илле Мостарăв таврара паллă кăмакаçă пулса тăрать. Кашни çĕнĕ пӳрт лартакан çын ăна платнике илсе кайнă, кăмакине те ăнах тутарнă. Унăн ĕçне пӳр йенчен те пахаласа мухтанă.

Кăçалхи май уйăхĕнче Илле Мостарăв Ишлей тĕлĕнчи разйеса тунă çĕре пынă. Унпа пĕрлех вĕсен йалĕнчен Григорий Ильушин тата Орлов та килнĕ.

— Мĕнле ĕç парас сире?—ыйтнă техник.

— Кирек мĕнле ĕç те йурать.

Çĕр чавнă çĕре таратнă вĕсене техник. Мостарăв тата унăн йултăшĕсем питĕ те хастарлăн ĕçленĕ. Ишлей участкинче халиччен пулман рекордсем тунă вĕсем: хăйсене панă нормăна кунсеренех 200 процент йе ытларах та тултарса пынă.

Икĕ ерне ĕçленĕ хыççăн техник кăмăллăн тавтуса урăх ĕçе куçарнă вĕсене. Вĕсем каменщиксем пулнă. Пулас çуртсен никĕсĕсене хывнă.

— Ку ĕç маншăн çĕнĕ ĕç,—тенĕ Мостарăв, хăйĕн йултăшĕ Ильушин çине пăхса.—Есĕ вĕрент мана. Ĕç майĕсене кăтарт.

Ильушин ку ĕçпе тахçанах паллашнă пулнă. Иртнĕ çулхине вăл Чикме хулинче те каменщик пулса ĕçленĕ. Анчах Мостарăв, паллă кăмакаçă, Ильушинпа Орловă часах хăй вĕрентме пуçланă. Нормă тăрăх вунă кун хушши ĕçлемели çурт никĕсне вĕсем ултă кун хушшинче туса пĕтернĕ.

— Тытăннă ĕçе хăвăртрах, хăвăртрах та лайăхрах туса пĕтерес килет манăн,—тет Мостарăв.—Вăраха тăсас килмест.

Çĕнĕ çурт хăвăрттăн купаланать. Толстов йертсе пыракан бригадăри платниксем ăмăртса ĕçлеççĕ. Кашнийĕшĕ хăйсем çине илнĕ ĕçе кăтартнă вăхăтран кайа йулмасăр туса пĕтересчĕ, теççĕ. Мостарăв ку ĕçе курать. Толстов бригадине мухтать вăл. Анчах татах та кал-калрах ĕçлеттерес килет унăн. Строителствă ĕçне хăвăртлатас килет.

— Техник йултăш, ирĕк пар мана Толстов бригади çумне хутшăнма?—тет Мостарăв.

Унăн ыйтăвĕ пурнăçа кĕрет. Икĕ йултăшĕпе пĕрле Толстов бригади çумне хутшăнать. Халиччен пĕрене чутлама та пĕлмен Ильушинпа Орлова платник ĕçне вĕрентет вăл. Ĕçрен хăрама кирлĕ мар, ĕç хăй хамăртан хăраса тăтăр, пире парăнтăр, тет. Строителствă ĕçĕ йумай хăвăртланать. Кăтартнă вăхăтран вунă кун малтан çĕнĕ çурт пулса тăрать.

Тепĕр çурт тума пуçлать бригадă.

— Кăна ĕнтĕ мансăрăн тăвăр,—тет Мостарăв, бригадир çине пăхнă май, кăмăллăн кулса.—Епĕ çĕнĕ çурт кăмакисене тума тытăнатăп.

Кăмака тăвать Мостарăв. Паллах, пысăк кăмакасене пĕччен тума питĕ те йăвăр.

— Пул мана пулăшакан!—тет вăл, шыв турттарнă çĕрте ĕçлекен пĕр çамрăк каччăна.—Вĕрен кăмака тума вĕрентетĕп.

Каччă килĕшет. Шыв турттарнă Шыв турттарнă çĕрте ĕçлеме йалтан хăйĕн ашшĕне чĕнсе илет Мостарăв. Хавасланса килĕшет 68 çулхи старик. Чи малтанах çĕнĕ чукунçул çине пăхса киллет. Уй варринче, вăрман варринче шăтса тухнă çĕнĕ çуртсем çине, пулас разйес çине пăхса тĕлĕнет. Ывăлĕпе калаçма пикенет. Ăча çĕнĕ хыпар, баракри пур коллектившăн савăнăçлă хыпар каласа пĕлтерет:

— Кĕтĕмĕр, ывăлăм. Сан çырăвна илсе вуланă хыççăнах зайавлени кайса патăм. Илме йышăнчĕç Халĕ ĕнтĕ... колхоз членĕсем ĕнтĕ епĕр.

Старик сăнĕнче тулли ĕмĕтлĕ хаваслăх паллийĕ çиçсе йалкăшать. Унăн аллине, тăван ашшĕн аллине хыттăн-хыттăн чăмăртать хĕрĕх икĕ çулхи Мостарăв—кăмакаçă, платник, каменщик.

— Сывлăх сунма пултаратăр!—тет вăл, йĕри-тавра пухăннă рабочисем çине пăхса.—Сирĕн пекех ĕнтĕ еп халĕ. Халĕ епĕ те колхозник...

Коллектив çын турĕ ăна. Коллективăн вăйхăватне нихçанхинчен те ытларах вăл чукунçул çинче ĕçлесе тупса илме пултарчĕ.

Каç пулса килет. Хĕвел паçăрах вăрман хыçне пытаннă. Барак умĕнче вучах йалкăнса çунать. Вучах йĕри-тавра çакăнса тăракан хурансем лакăртатса вĕреççĕ. Кĕрхи автан тукмакĕсем пиçеççĕ. Пĕр такмакçă сăвă вулать. Ăна итлеççĕ. Тата вула-ха, теççĕ. Вулать:

Вăрман, вăрман ытла та уçă,
Ытла та капăр кăкăра.
Мĕн пек телейлĕ манăн пуçăм
Кунти пур ырлăха кура...

Ырлăх! Пурнăçри ырлăха уçăмлăн куратпăр, вăл ырлăха хамăр тăватпăр. Вăрман урлă чукунçул хыватпăр. Ырă! Анчах пуринчен те ырри сем—çав ырлăха тăвакансем... Çынсем. Вĕсем—ырăран та ырă.

Митта Петĕрĕ.

Малти рете тухрĕ

Трак районĕнчи „Большевик" крахмал савăтне 5 районти колхозсем çĕрулми параççĕ. 5 районри колхозсен хушшинче, Трак районĕнчи „Унгастрой" колхоз государствăна çĕрулми парас тĕлĕшпе малти рете тухрĕ. Вăл çентăберĕн 20-мĕшне пĕтĕмпех парса татрĕ.

Уйрăм районсем государствăна çĕрулми парас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Çентăберĕн 20 мĕшне Елĕк районĕнчен крахмал савăтне вĕр центнĕр та пыман.

И. Дубровин.

Парти пурнăçĕ

Парти историйĕн Кĕске курсĕпе малтанлăха паллашатпăр

ТРАК. МТ Станцинче хаљхи вăхăтчен политикăна вĕренекен кружоксем пулман. Халĕ парти ретне çĕнĕрен кĕнисене, сочувствуйушчисене тата комсомолецсене пĕрлештерсе пĕр кружок организацилерĕмĕр. Кружока йертсе пыма парти райкомĕ мана çирĕплетрĕ.

Çенťабĕрĕн 23 мĕшĕнче пухăнса кружок старăстине суйларăмăр, кружок мĕнле ĕçлесси çинчен кашни вĕренекенпе калаçрăмăр. Унтан çенťабĕрĕн 9-мĕшпе 17-мĕш кунĕсенче тухнă „Правда" умстаťйисене тата парти историйĕн Кĕске курсĕн пĕрремĕш сыпăкĕн çуррине вуларăмăр. Вуланă вăхăтрах чарăна-чарăна чăвашла ăнлантарса патăм. Ăнлантарнă вăхăтра хаçатсем çинчен тĕрлĕ примерсем илсе кăтартрăм. Сăмахран, 1861 çулччен, крепăсла права вăхăтĕнче хреснченсене йапала вырăнне сутнине, 1838 çулта Çĕрпÿ районĕнчи Мами йалĕнчи Йефимийа Куçминана 57 тенкĕ те 14 пус çурра сутни çинчен каласа патăм.

Ниçи ыйтăвĕпе вуланă вăхăтра ĕлĕк Октабĕр револуциччен, чăваш халăхне пусмăрлани, унчухне чăваш ачисене аслă шкулсене илменни çинчен калаçрăмăр.

Вĕренекенсем аван итлесе ларчĕç.

Хаљхи вăхăтра парти историйĕн Кĕске курсне тĕплĕн вĕренме хатĕрленетпĕр. Вĕренсе лармалли пÿлĕме лозунгсемпе, портретсемпе илемлететпĕр. Кашни вĕренекен тетраť, кăрандаш хатĕрлеме пулчĕç.

Закамский.

Пропагандиссен çеминарĕ пулчĕ

ЙЕЛЧĔК. Çенťабĕрĕн 19-мĕшĕнче парти райкомĕ хăйĕн ларăвĕнче пропагандиссене пăхса тухса çирĕплетрĕ. Вĕсен хушшинче ПСК(б)П райкомĕн çекретарĕсем Шаков, Прокопйев, Çтепанăвă тата райком инструктăрĕсем те пур.

Çенťабĕрĕн 22-мĕшĕнче пропагандиссемпе çеминар пулса иртрĕ.

Районра пур пуçламĕш организацисенче те „Правда" хаçат çинче пичетленсе тухнă „ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕпе" малтанлăха паллаштарас ĕç вăйланса пыраť.

ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне пурте ырлаççĕ.

— Пире Сталин йулташ пит те лайăх, ăнланмала чĕлхепе çырнă учебник туса пачĕ. Халĕ пирĕн „отлично" тата „хорошо" паллăсемпе вĕренес пулаť,—тет Куракин йертсе пыракан кружокра вĕренекен Можайĕв йулташ.

Ф. Майкăв.

Жуликсенчен тасалар

Тутаркас районĕнче пур участкăсенче те тăшмансем нумай сăтăрлă ĕçсем туса пурăннă. Вĕсене пĕтерес тĕлĕшпе районра халĕ те кăшкăрашусăр пуçне урăх нимех те тумаççĕ-ха.

Çав сăтăрлă ĕçсен йулашкисене пĕтерес йенĕпе парти райкомĕ нимĕн те ĕçлемен. ПСК(б)П райком çекретарĕ пулса ĕçленĕ В. Т. Иванов, районри парторганизацине мобилизацилес вырăнне, хăй çитменлĕхсем тата саккуна хирĕçле ĕçсем тума пулăшнă.

Колхозсенчи çтена хаçачĕсен редактăрĕсен курсĕнче ĕçленĕ преподаватĕлсене ĕç укçи панă чухне, райкомăн управделĕпе Проворăвпа пĕрле, суйа документ çине техничкă Петровă йулташа алă пустарса, Иванов укçа илнĕ.

Ун çинчен райком çумĕнчи пуçламĕш парторганизацин отчотпа суйлав пухăвĕнче тухса каланăччĕ. Ивановпа Проворăв мана елекçĕ теме тытăнчĕç. Парторг Зубков йулташ çавсене пĕлет пулсан та ним те тумарĕ.

Иванов кайнă хыççăн та государствă укçине хапсăнакансем татах йулнă. Райкомра управделами пулса ĕçленĕскер Проворăв пĕрмайах парти бÿджетĕнчен укçа вăрласа пурăннă. Парти райкомĕн çекретарĕсемпе, Аниçимăв тата Зубков йулташсемпе пĕр шухăшлă пулса, райком бÿджетĕнчи укçана МТС, йалпо, райĕçтăвком тата столовăй счочĕсем çине куçараççĕ. Кайран, Проворăв йалăнтарнипе, 1938 çулта çуркунне, 3300 тенкĕ парса мотоциклет туйанаççĕ. Унпа никам та çÿреме пĕлмен пирки Проворăв çÿрекелет те мотоциклета прахăçа кăлараť.

Çавăн пек бÿджетри укçана усăсăр çĕре йани çинчен ПСК(б)П райком членĕсене, обкома пĕлтерсе, укçа-тенкĕсене расхутланине тĕрĕслесе тухма ыйтнăччĕ, анчах çенťабĕр уйăхĕччен никам та нимĕн те тумарĕ.

Çенťабĕр уйăхĕнче Обкомăн финанспа хуçалăх пайĕ йанă ревизор-контролор Йакăвлĕв йулташ нумай çитменлĕхсем тупрĕ.

Райкомăн укçи-тенкине расхутланине тĕрĕсленĕ чухне Проворăв тĕрлĕ суйа документсем тупса парса çăлăнасшăн пулчĕ. Анчах пултараймарĕ.

ПСК(б) Парти райкомĕ хăйĕн ларăвĕнче пăхса тухса Проворăва ĕçрен кăларчĕ, унăн партилĕхĕ çинчен пăхса тухма пуçламĕш организацине хушрĕ.

Пуçламĕш парторганизаци çав ĕçсемшĕн Проворăва хытă йатлаçа асăрхаттарса хăварас, терĕ, Зубковпа Аниçимăв çинчен тепĕр пухура хăйсемпе пĕрле сÿтсе-йавма йышăнчĕ.

Манăн пĕлес килет—кам айăпĕпе манăн çигналсем Обкомра ийунĭрен пуçласа çенťабĕре çитиччен выртрĕç-ши?

Бирÿков.
ПСК(б)П Тутаркас райком çекретарĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

Халăх перепиçне хатĕрленесси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ кăçалхи çенťабĕрĕн 21-мĕшĕнче Пĕтĕм Сойузĕпе халăх перепиçне ирттерме хатĕрленес ĕçсем мĕнле пыни çинчен Йĕпреçпе Çĕмĕрле райĕçтăвком доклачĕсене тата Халăх-хуçалăх учот Тытăмĕн содокладне итленĕ. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çак ыйту тăрăх йышăннă постановленире Йĕпреçпе Çĕмĕрле райĕçтăвкомĕсем халăх перепиçĕ политикăпа хуçалăх ыйтăвĕсем йенчен пысăк вырăнта тăнине хакламанни çине кăтартса панă. Вăл райĕçтăвкомсем перепиç кадрĕсене (счотчиксемпе инструктăр-контролорсене) тупса çирĕплетес ĕçе нумай вăхăта чăснă. Райĕçтăвкомсем çумĕнчи кадрсем тупса хатĕрлес йенĕпе ĕçлекен комиççисем çенťабĕрĕн иккĕмĕш çурмауйăхне çитиччен те нимĕн те туман, кайран вара, перепиç кадрĕсене çирĕплетме тытансан, ытлашши васкаса ÿкнĕ.

Йалсовечĕсем çумĕнче перепиç ĕçне пулăшакан комиççисем организацилесси начар пыраť, организациленĕ комиççисене те ĕçре пулăшса пыни çук.

Çĕмĕрле хулинче ку тарана çитсе те çуртсен, хватерсен номĕрĕсене, урам йачĕсене йĕркелесе тухман.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Йĕпреçпе Çĕмĕрле райĕçтăвкомĕсем ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ халăх перепиçĕ çинчен йышăннă постановленине пурнăçа кĕртменни çине кăтартса, халăх перепиçне хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене 10 кун хушшинче тÿрлетме хушнă. Çакăнпа пĕрлех вăл пур райĕçтăвкомсемпе хула совет председателĕсене те перепиç кадрĕсене план тăрăх çирĕплетсе пыма хушнă, вĕсене çирĕплетесси уйрăмăн пулмала. Райĕçтăвком президиумĕсенче перепиçе хатĕрленес ĕçсем мĕнле пыни çинчен Халăх-хуçалăх учот инспектăрĕсен, йалсовет председателĕсен доклачĕсене итлемеле, палăртнă çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пымала. Йалсовечĕсем, урам комитечĕсем, пысăк колхозсемпе предприйатисем çумĕнче перепиç ĕçне пулăшма тăвакан комиççисене халех организацилесе пĕтермеле. Çавăн пекех райĕçтăвкомсен перепиç ыйтăвĕсем тăрăх халăх хушшинче массăлă ăнлантару ĕçне вăйлатса пымала, счотчиксем, инструктăр-контролорсем, перепиç ĕçне пулăшакан комиççисем хушшинче перепиçе лайăх хатĕрленес ыйтусем тăрăх социалисăмла ăмăрту организацилемеле.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Халăх-хуçалăх учот Тытăмне перепиçе хатĕрленес ыйтусем тăрăх инспектăрсене кирлĕ пек инструктаж, консуљтаци пама хушнă, вăхăтран вăхăта инспектăрсене чĕнсе, перепиçе хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен докладсем итлемеле, кайа йулса пыракан районсене пулăшма хăйĕн работникĕсене йамала.

Халăх перепиçне хатĕрленни

ЙЕЛЧĔК. Халăх перепиçне хатĕрленес тĕлĕшпе районра организацилĕ план тунă. Перепиçре кирлĕ кадрсене çенťабĕрĕн 19-мĕшне тупса çитерсе райĕçтăвком президиумĕнче пăхса тухса çирĕплетнĕ.

Йалсенче перепиç ыйтăвĕ тăрăх массăлă-ăнлантарулă ĕçсем пыраççĕ. 3-мĕш участкăри перепиç пайне (участкă инспектăрĕ Ниткин) кĕрекен йалсенчи колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче пухусем туса, уйрăм ыйтусем лартса перепиç çинчен ăнлантарса параççĕ. 2-мĕш номĕрлĕ инструктăрски участкăра (инструктăр-контролор Костин) агитатăрсем колхозниксемпе йединоличниксене авăн çапнă çĕре тухса перепиç çинчен ăнлантарса панă. Уйрăм инструктăрски участкăсенче (Ентебе йалсовечĕ т. ыт. те) перепиç кĕтесĕсем тунă.

Çав вăхăтрах Кивĕ Ейпеç йалсовечĕ (председателĕ Панкратăв) Пушкин йачĕпе тăракан колхоз çумĕнче халĕ те, перепиçе хатĕрленес ĕçре пулăшакан комиççине организацилемен. Ку йалсоветра массăлă-ăнлантарулă ĕç те çук.

Й. Воробйов.

Хĕрлĕ Çара хаваслăн кайрĕç

Ишек йалсоветне (Ишлей р.) кĕрекен йалсенчен кăçал 11 призывник Хĕрлĕ Çар ретне йурăхлă пулчĕç. Хĕрлĕ Çар ретне кайма йурăхлă пулнишĕн вĕсем тулли кăмăлпа савăнаççĕ.

Хĕрлĕ Çара кайнă çамрăксем—колхоз производствинчи стахановĕцсем, ударниксем. Хура Сырмари 10-мĕш бригадăри Г. Никифăрăв аслă коњух пулса ĕçленĕ. Хăй çумне çирĕплетнĕ 15 лашана лайăх пăхса тăнă. Вăл пăхакан лашасем йаланах мăнтăр. Колхоз пуçланнăранпах бригадăри „Ÿсĕм" çтена хаçат редактăрĕ. 1937 çулта вăл 34 номĕр, кăçал 11 номĕр çтена хаçачĕ кăларнă. Хĕрлĕ Çар ретĕнче те колхозри пек тăрăшса ĕçлесе, вĕренсе пыма сăмах паче вăл.

7-мĕш бригадăри З. Дмитрийев атă-пушмак мастерскойĕнче ĕçлерĕ. Август тата çенťабĕрĕн çур уйăхри планне 300 процент тултарнă. Уйăхра 300 тенкĕ ытла ĕçлесе илнĕ.

Лукойанăв, Никифăрăв призывниксем Хĕрлĕ Çар чаçĕсене кайрĕç. Колхозниксем колхозри пултарулă çамрăксене лайăх ăсатрĕç.

Арк. Наумăв.

ФЕЛЙЕТОН

Пĕр нарком арăмĕн хурланăвĕ

Пĕрне-пĕри пулăшни аван йапала. Уншăн никам та, пуринчен ытла çав пулăшупа усă куракан çын, нихăçан та йатлаçас çук. Акă, калăпăр, нумай пулмасť пĕр нарком хăйĕн арăмне пулăшма шут тытнă.

— Епĕ ĕнтĕ пысăк çын, епĕ ĕнтĕ нарком,—тенĕ вăл, хулпуççисене сиккелентерсе.—Есĕ манăн арăм. Есĕ те пĕчĕк çын мар. Çапах, пĕлÿлĕх çителĕксĕр санăн. Мĕн тумала-ха? Паллах, вĕренмеле. Аслă пĕлÿлĕх илмеле. Ку ĕçре сана епĕ мĕн вăй çитнĕ таран пулăшма пултаратăп. Есĕ институтра вĕренĕн. Çуран çÿремĕн. Ирсеренех машинăпа леççе хăварăп.

Арăмĕ килĕшнĕ. Студенткă пулма сăмах панă.

— Ну, кайрăмăр!—тенĕ нарком.—Аťа, леççе хăварам сана.

Çăмăл автомобил çине ларса кайнă вĕсем. Çитнĕ. Арăмĕн хулĕнчен клентĕрлесе илнĕ те нарком, Чăвашпединститут килкартинчи тротуар тăрăх шăккăрт-шăккăрт утса кайнă. Çаплах, клентĕрленипех вĕсем, институт кăнцеларине пырса кĕнĕ.

— Ăçта директăр?

— Епĕ уншăн!—тенĕ институт директăрĕн помошникĕ Творцов.—Ларăр, йулташ нарком! Ларăр. Мĕнле пурăнкалатăр?

— Халех илсе кай-ха манăн арăма,—тесе приказ панă нарком.—Вăл хăш аудиторинче вĕренмелине кăтарт.

— Аха, йураť, йураť,—тенĕ Творцов.—Халех еп... Ларăр-ха есĕр.

Вăл тухса кайнă. Вĕренÿ пайĕн пуçлăхĕ патне пынă.

— Итле-ха,—тенĕ Творцов.—Нарком арăмĕн хăш аудиторинче вĕренмеле иккенне кала-ха.. Ну, ан кала, хăвах илсе кай-ха ăна, ăçта иккенне кăтарт.

— Йурĕ,—тенĕ вĕренÿ пайĕн пуçлăхĕ. Тухса кайнă вăл. Çекретар патне пынă:

— Итле-ха. Нарком арăмĕ килнĕ. Аудитори ăçта иккенне пĕлмест. Кăтартса йар-ха тархасшăн.

— Йурĕ,—тенĕ çекретар.

Тухса кайнă вăл. Аудитори алăкĕ умне çитсе чылайччен итлесе тăнă. Шалта—Руденко йулташ лекци вуланă. Алăка кăшт çеç уçнă та çекретар, лектăра пулăшакан литфак çекретарне кăчăк туртса илнĕ.

— Итле-ха,—тенĕ вăл хыпаланса.—Нарком арăмĕ килнĕ. Аťа-ха йан пата.

Литфак çекретарĕ пынă.

— Кунта мар вăл,—тенĕ вĕренÿ пайĕн çекретарĕ.—Вĕренÿ пайĕн пуçлăхĕ патĕнче ларать пулмала, çав килсе каларĕ. Аудитори тĕлне пĕлмест тет. Илсе кайса кăтарт-ха ес ăна.

— Йурĕ,—тенĕ литфак çекретарĕ.—Вăхăт та çукчĕ те манăн.

Нарком арăмне шыраса вĕренÿ пайĕн пуçлăхĕ патне пынă вăл. Ыйтнă.

— Кунта мар вăл,—тенĕ пуçлăх.—Директăр помошникĕн пÿлĕмĕнче ларать пулмала. Кай-ха. Аудитори ăçта иккенне кăтарт есĕ ăна.

Кайнă.

— Час çÿрейместĕр-çке,—тенĕ нарком.—Ăçта кунта манăн арăм вĕреимели аудитори? Илсе кай-ха...

Çак хушăра, литфак çекретарĕ нарком арăмне шыраса пÿлĕмрен-пÿлĕме кĕрсе çÿренĕ чухне, аудиторинче „тăвăл" тухса кайнă.

— Ăçта Каťа?—тенĕ Руденко.—Ăçта кайса кĕчĕ манăн çекретар?!

Тарăхмасăрах йатлаçман лектăр. Лекци пынă вăхăтра хăйĕн çекретарĕсĕр вăл алăсăрпа перех иккени такамшăн та паллă, пуринчен ытла ку институтри руководителсемшĕн тахçанах та паллă пулмала.

Акă аудитори алăкĕ йерипенĕн уçалнă. Каťă кĕрсе тăнă. Радикуљ йатнă нарком арăмне вăл клентĕрлесе тытнă.

— Ăçта çÿретĕн есĕ?—тенĕ лектăр.

— Акă,—тенĕ Каťă,—Коршунова йулташ аудитори ăçта иккенне пĕлмест те, çавăтса килтĕм.

— Çавăтса?! Мĕн, суккăр-им вăл? Урасăр-им?

Çак сăмахсене илтсен, нарком арăмĕ калама çук хурланнă.

— Расписани çине пăхас пулаť, йулташ Коршунова!—тенĕ ăна лектăр.—Есĕ ĕнтĕ студенткă. Правилăсене пăхăнас пулаť.

Ку сăмахсем ăна тата ытларах хурлантарнă. Вăхăтлăха вăл ăçта тăнине те маннă.

П. Ламанис.

Лайăх ĕçлекен колхозра

Р. Волкăв коммунис чылайранпа ĕнтĕ Кшавăш (Ишлей р.) йалсоветне кĕрекен „Хĕрлĕ плуг" колхоз председателĕнче ĕçлет. Волкăв йулташ йертсе пыракан колхоз организаципе хуçалăх йенчен çулран-çул тĕрекленсе пыраť. Колхоз йалхуçалăх ĕçĕсене тата государствă умĕнчи обйазателствăсене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пыраť.

Тырпулсене уйран пуçтарса кĕнĕ, авăн çапнă, кĕрхи çĕртме тунă çĕрте тата ытти ĕçсенче те бригадăсемпе колхозниксем хушшинче ăмăрту тата стахановла йухăм анлăн сарăлса пынă. Çакна май ĕнтĕ йалхуçалăх ĕçĕсем вăхăтра вĕçленсе пычĕç.

„Хĕрлĕ плуг" колхоз авăн çапса пĕтерсе, государствăна обйазателствă тăрăх тырпул тата кивçен илнĕ тырра парса татнă. Машинă-трактăрлă станцине те натурплата тыррине август уйăхĕн йулашки кунĕсенчех панă.

4 гектар çинче кантăр акса тунă. Кантăра çуллахи вăхăтра шăварса тăнă пирки, вăл вăйлă пулнă.

Колхозри бригадăсем çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве хаљ пуçарса пыраççĕ. Кĕрхи çĕртме планне çенťабĕр уйăхĕн малтанхи кунĕсенчех тултарнă. Çитес çулта акмалли вăрлăхсене уйрăммăн хатĕрлесе хунă.

Колхоз йалхуçалăхĕнчи кĕрхи ĕçсене пĕтерне хыççăнах, выљăхсене хĕл каçарма хатĕрленме тытăнчĕ. Выљăхсене çитерме 30 тоннă çилос хывнă, ытти апатсене те çителĕклĕ таран хатĕрленĕ.

40 ĕне вырнаçмалăх пĕр вите, 80 лаша вырнаçмалăх тепĕр вите пулаť.

Г. Щербаков.

Германи мирлĕ саманана хăратса тăраť

Германи Чехословакине хăратса тăни Центрти Йевропăри лару-тăрăва çав тери çивĕчлетсе йачĕ. Август уйăхĕнче Германи çарĕн маневрисем пуçланнă. Маневрсенче пулма резервра тăракансене 700 пин çын ытла чĕнсе илнĕ. Германи çарĕнчи салтаксен хисепĕ 1,5 мĕлйун çывăх иртнĕ. Çакăнпа пĕрлех пĕтĕм Германи тăрăх мобилизаци пуçланнă. 400 пине йахăн рабочисене предприйатисенче ĕçленĕ çĕртен илсе, вĕсене Германин хĕвеланăçĕнчи чиккисенче вăрçă укрепленисем тунă çĕре ăсатнă. Халăхсенчен продоволствисем, фуражсем тата транспăрт средствисене тытса илме пуçланă. Тĕрĕссипе Германи çĕршывĕнче пĕтĕмĕшлĕ мобилизаци пуçланнă. Германи çарĕн „маневрисен" интереслĕ йенне çакна палăртмала: çарсем ытларах Чехословаки чиккисем çывăхне туртăннă. Кунпа пĕрлех Гитлĕрăн Чехословакири агентури—генлейнла парти—Германи Чехословаки çине тапăнса кĕрсе кайма сăлтав тăвас шутпа провокацисем тăвассине вăйлăлатасси çинчен задани илнĕ. Çак çулхи çуркунне Германи çарĕнчи командирсен составне пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарса лартнă. Ку вăл Гитлĕр çитес çывăх вăхăтрах Чехословаки çине тапăнса кĕрсе кайма йышăннине кăтартса панă. 5-мĕш çар ушкăнне (Венăри штаб) йертсе пыма Лист генерала лартнă, 4-мĕш çар ушкăнне (Лейпциг) йертсе пыма—Рейхенау генерала тата 2-мĕш çар ушкăнне (Дрезден) йертсе пыма фон Бок генерала лартнă. Çав генералсем пурте Чехословаки çине вăрçăпа тухмалли стратегилĕ тата оперативлă плансене тăвас тĕлĕшпе специализациленнĕ. Май уйăхĕнчех Германи çарĕсене Чехословаки чиккисем çывăхне илсе пырса тултарнă пирки Чехословаки правителствин ирĕксĕрех кирлĕ ĕçсене тума йышăнмала пулнă. Ун чухне запасра тăракан пĕр çулхисене мобилизациленĕ пулнă. Судет облăçне Германи чиккисем çывăхне çар чаçĕсене йанă пулнă. Германи Чехословакине хирĕç вăрçа хатĕрленни пĕтĕм тĕнчери халăхсене тарăхтарса йанă, анчах ку тарăху Германи фашисĕсен ĕмĕчĕсене чарса лартайман. Фашиссем каçса кайсах вăрçа хатĕрленеççĕ.

Австрине тытса илни Чехословаки çине тапăнма йурăхлă май туса хунă, Чехословакине стратеги тĕлĕшĕнчен питех те лайăх мар лару-тăрăва кĕртсе тăратнă. Германи фашисĕсем акă мĕн çине шанаççĕ: Германи Чехословаки çине тапăнас-мĕн пулсан, Англипе Франци Чехословаки хутне кĕрес çук, вĕсем Испанири ĕççене хутшăнас мар, тĕлĕшпе ĕçлекен комитет йевĕрлĕ, çĕнĕ комитет тувипех лăпланĕç. Ун хыççăн вара Германи Чехословаки çине çиçĕм пекех хăвăртăн ытканса кĕрсе кайма пултараť. Çакна Испани примерĕ кăтартса панă.

Çаксене шута илсе, Германи фашисĕмĕ хăйĕн генлейнла агентури урлă Чехословаки çине вăрçăпа тухас шутпа провокацисем тума чарăнман. Паллă, Англири тата Францири реакци, Гитлĕра йурас тата унăн пур требавонийĕсене те çырлахтарас тесе, мĕн тумалисене пурне те тума йышăннă. Прагăна йатарласах Англин фашисла лордне Ренсимена йанă пулнă. Ăна Чехословаки правителствине хĕсмĕ, Чехословаки правителствине генлейнăвĕцсене уступкăсем пама ÿкĕтлеме хушса йанă пулнă.

Ренсимен миççийĕн задачи—Чехословаки правителствине мирлĕ майпа пăвса вĕлерес ĕçре Германи фашисăмне пулăшасси пулнă. Анчах та Ренсимен миççийĕ йалтах арканса кайнă, мĕншĕн тесен „Судет проблеми" тесе калавине мирлĕ майпа татса парасси Гитлĕр планĕсене пачах та кĕмеççĕ. Германишĕн пулсан „Судет проблеми" Чехословакине таткаламалли тата Йевропăн кăнтăр-хĕвелтухăçĕнче фашисла Германине йут çĕршывсене тытса илес тĕлĕшпе хăйĕн малашнехи планĕсене пурнăçа кĕртсе пымалли çăмăл май çеç пулса тăраť. Çак çулти çуркунне Генлейн—Гитлĕрăн Чехословакири агентурин руководителĕ—хăй партийĕн Карлсбадскра пулнă сйесенче, Берлинран кăтартса пани тăрăх, Чехословаки правителстви умне „8 требовани" кăларса тăратнă. Вĕсенчен тĕп требовани пулса тăраканни вăл—Судет облăçне автономи памала тăвасси пулаť. Лондăнпа Париж хĕсникпе Чехословаки правителстви генлейнăвĕцсен çав „8 требованисемпе" пуринпе тенĕ пекех килĕшнĕ. Чехословаки правителстви пама пулнă уступкăсем Чехословаки хăйне уйрăм государствă пулса пурнăçшĕн хăрушă пулса тăраççĕ. Анчах та тĕрĕссипе генлейнăвĕцсем çав уступкăсене те йышăнман. Кăшнинчех, Чехословаки правителстви генлейнăвĕцсене çĕнĕрен уступкăсем пама пулсан, генлейнăвĕцсем каллех çĕнĕ уступкăсем, ытларан та ытла йурăхсăр требованисем кăларса тăратнă. Вĕсем Чехословаки республикине хирĕç вăрçăпа тухма сăлтав шыранă. Çенťабĕрĕн 12-мĕшĕнче фашиссен Нюрнбергри „сйесĕнче" Гитлĕр сăмах тухса каланă. Вăл Судет нимĕçĕсене „самоопределени прави" пама ыйтнă. Çакă вăл плебисцит тунийех пулаť те ĕнтĕ, вăл плебисцита тума генлейнăвĕцсем ыйтаççĕ. Вĕсем плебисцит вăхăтĕнче хайар терорпа тата провокацилĕ майсемпе хăтланса, хăйсене йурăхлă резултатсем тума тăрăшаççĕ.

Гитлĕр Нюрнбергра сăмах калана хыççăн çийĕнчех генлейнăвĕцсем, команда пана пекех, пĕтĕм Судет облăçĕ тăрăх йунлă çапăçусем пуçласа йанă. Хеб, Карловă Варă, Либерец, Варнсдорф, Хомутов тата ытти хуласенче те генлейнла штурмовиксем хĕçпăшаллă выступленисем туса ирттернĕ, вĕсем почтăна, телеграфа, правителствă учрежденисене тата ыт. те тытса илнĕ пулнă. Генлейнăвĕцсем Чехословаки республикине хирĕç пăлхав тумалли плана ĕçе кĕртме пуçланă. Вăл плана вĕсем Гитлĕрпа килĕшсе тунă пулнă. Çакăнпа пĕрлех Генлейн прокламаци кăларнă, унта вăл Судет облăçне Германи çумне пĕрлештерме уççăнах ыйтнă. Чехословаки правителстви, халăхăн ирĕк-кăмăлĕ çине тата халăх республикĕн никăма пăхăнмасăр пурăнассине, вăл хăйне уйрăм государствă пулса пурăнассине хăтлеме хатĕр тăнине çине тайанса, генлейнăвĕцсен провокацисене хирĕç ответлесе татăклă ĕçсем тума йышăннă. Чехословаки правителстви Генлейна, ăна государствăн изменникĕ вырăнне шутласа, арĕслесси çинчен приказ кăларнă тата вăл йертсе пыракан партине саккунсăр парти тесе пĕлтернĕ. Генлейнăвĕцсен пăлхавне путарса лартнă. Судет облăçĕнчи 15 округра чрезвычайлă лару-тăру туса хунă. Йатарласах уйрăм судсем тунă, вăл судсене государствăна хирĕçле выступленисем тăвакансене персе пăрахмала таранах суд тума правă панă. Çапла вара Судет облăçĕнчи пур районсенче те йĕркелĕх туса хунă.

Çавăн пек йăвăр кунсенче Англи премйерĕ Чемберлен Берхтесгадене Гитлĕр патне кайма шут тытнă. Иккĕленмелли çук, Чемберлен демократилĕ çĕршывсен шучĕпе фашисла агрессăрсемпе кавар тума туртăннипе паллă пулса тăракан скер, Гитлĕр патне Чехословакине хÿтлес шутпа мар, Гитлĕра мĕнле те пулин çĕнĕ вариант, „Судет проблемине" татса пама Германи фашисĕсене йурăхлă мĕнле те пулин çĕнĕ вариант туртса кăларттарас шутпа кайнă. Йут çĕршывсенчи пичетри авторитетлă обозревателсем шутлани питех те тĕрĕс: Гитлĕр „4 державăсен пактне" йе сывлăшри пакта тума пулнипе килĕшсе, Чемберлен Чехословакин интересĕсене кăна мар, вăл тата демократипе мирĕн интересĕсене те пĕтĕмĕшпех сутма килĕшнĕ. Гитлĕр Чехословаки çине Йевропăн кăнтăр-хĕвелтухăçĕнче хăйĕн планĕсене пурнăçа кĕртсе пырас çĕрте кансĕрлесе тăракан çине пăхнă пек пăхаť. Германи фашисăмĕ йут çĕршывсен територисене тытса илмелли пысăк вăрçă тума шутлаť. Вăл Франци çине тапăнма ĕмĕтленсе те плансем тăваť. Вăл Совет Сойузĕ çине тапăнас шута та тытсах çÿрет. „Пысăк вăрçă" тума Германи фашисăмне Йевропăн Кăнтăр-Хĕвелтухăçĕнче продоволствисем, чĕртаварсем кирлĕ.

Чехословаки республикĕ, пĕр-пĕрне пулăшас тĕлĕшпе ССР Сойузĕпе тата Франципе пактсемпе сыхăнса тăраканскер, Центрти Йевропăра мирĕн тĕрекĕ пулса тăраť, вăл Германи хăйĕн территорине Йевропăн Хĕвелтухăçне сарса пынă çĕрте çула картласа тăраť. Акă мĕншĕн Германи пуринчен малтан Чехословакине хирĕç тухма хатĕрленет, акă мĕншĕн Гитлĕр Чехословакин ССР Сойузĕпе тата Франципе тунă договăрĕсене пăрахăçа кăларма ыйтаť. Пĕртте иккĕленмелли çук, кун пирки Чемберленпа Гитлĕр сÿтсе-йавнах. Анчах та пĕр-пĕрне пулăшма хатĕр тăракан çак икĕ партнĕр та хăшпĕр кирлĕ фактăрсене шута илмеççĕ.

Чи малтанах, Чехословаки вăл—Австри мар. Чехословаки халăхĕ, 300 çул хушши нимĕçсен пусмăрне тÿссе ирттернĕскер, хăй республикĕшĕн йулашки тумлам йунйулмиччен тăма хатĕр. Чехословакин чаплă промышленноç тата чаплăн хĕçпăшалланнă çар пур. Стратеги тĕлĕшĕнчен кансĕртерех пулсан та, Чехословаки, ун çине Германи тапăнсан йе вăрçăпа тухсан, оборонăра тăнипех лăпланмĕ. Германи фашисăмĕ Чехословакине хирĕç вăрçăпа тухса, ăна кĕске хушăрах пĕтерсе тăкмалли тактикине пурнăçа кĕртейес çук. Нумайах пулмасť пĕр çар специалисĕ Швейцарин „Национал Цейтунг" йатлă хаçатĕнче çырнă пек, Чехословакине хирĕç пуçарнă вăрçă—Германи çарĕ Прагăна кунне ахаљтен çеç прогулкă тунă пек пырса курни пулас çук.

Г. Б.

Йевропăри хăрушă лару-тăру

Йевропăри государствăсем вăрçă тĕлĕшпе туса иртерекен ĕçсем

Центрти Йевропăри лару-тăру çав тери çивĕчленсе кайнă пирки, Йевропăри нумайĕш государствăсем вăрçă тĕлĕшпе васкавлăн ĕçсем туса пыраççĕ.

Çеҥтаберĕн 24-мĕшĕнче Йугослави правительствин васкавлă ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура çарăн пысăк соединенийĕсен командуйушчийĕсем те пулнă. Вăрçă тĕлĕшпе васкавлă ĕçсем туса ирттерме йышăннă. Иугослави çĕршывĕн территорийĕнче пухусем, митингсем, шествисемпе демонстрацисем тума чарни çинчен распорйажени кăларнă. Çак распорйажение тĕнчери лару-тăру питех те çивĕчленсе кайнă пирки кăларнă.

Голланди çарĕнче кирек мĕнле отпускçене те чарса лартнă.

Норвеги çарĕнче тинĕс флотĕнче тата çыранри артиллери чаçĕсенче службăра тăракансене, вĕсен служба срукĕ тухнă пулсан та, уйрăм распорйажени пулаччен тытса йулнă.

(ТАСС).

Чехословаки правительствин оборонă тĕлĕшпе тăвакан ĕçĕсем

Чехословаки республикĕн президенчĕ Бенеш республикă оборонин аслă совечĕн составне çирĕплетнĕ. Унта çаксем кĕнĕ: премйер тата çар министрĕ генерал Сыровы, министрсем: шалти ĕçсен—Черны, йут çĕршыв ĕçĕсен—Крофта, финанс ĕçĕсен—Калфус тата ыт. те—пурĕ тăхăр çын.

Чехословаки çарĕн главнокомандуйушчине генералҍнăй штаб начаҍникне çар генералне Лҍудвик Крейчине лартнă.

Пĕтĕм çĕршывĕпе туса иртерне мобилизаци çумне хушса, Чехословаки правительстви çĕнĕ распорйажени кăларнă. Вăл распорйажени тăрăх, çар ретне чĕнсе илмен кашни гражданинах государствă органĕсем государствăна хўтлес тĕлĕшпе кирек мĕнле повиннăçе те пурнăçа кĕртне çĕрте усă курма пултараççĕ.

Столица çине кĕтмен çĕртен сывлăшран пырса тапăнассинчен сыхланса, Прагăра распорйажени кăларнă, вăл распорйажени тăрăх пур çуртсемпе хватерсенче те касхине сутăсем курăнмала мар ҫумала. Трамвайсем, автобуссем, автомобилсем тĕттĕмлетнĕ çутăпа çўремеле.

(ТАСС).

Судет облăçĕнче мобилизаци ăнăçлăн иртнĕ

Германине тарса кайнă Генлейн (Судет облăçĕнчи фашисла-нимĕçсен партин пуçлăхĕ пулнăскер) Судет нимĕçĕсене мобилизаци приказне хирĕç пулма радиопа чĕнсе калана пулин те, Судет облăçĕнче мобилизаци пурпĕрех ăнăçлă иртнĕ. Республикăна сыхлас тĕлĕшпе çар обйазаннăçĕсене ĕçе кĕртес шутпа, нимĕç-резервистсем, нумай мар çынсемсĕр пуçне, назначени вырăнĕсене вăхăтра пынă.

(ТАСС).

Францире запасра тăракансен пĕр пайне мобилизацилес ĕç мĕнле иртсе пыни

Çеҥтаберĕн 24-мĕшĕнче Францире запасра тăракансен пĕр пайне мобилизаци тăвасси çинчен пĕлтерни питĕ те пысăк лăпкăлăхпа, организацилĕхпе тата йĕркелĕхпе пурнăçа кĕрсе пыраҍ. Призыва тăма тивĕçлĕ мĕн пур запасра тăракансем мобилизаци пункчĕсене вăхăтра тата кăтартнă срукра тĕрĕс пыраççĕ.

Çеҥтаберĕн 25-мĕшĕнче. Парижре нацилĕ оборонă валҍҍи кирлĕ тата Францирен йут вырăнсене кăларма вăхăтлăха чарнă таварсен çĕнĕ списăкне пичетлесе кăларнă. Вăл таварсем хушшинче—каучук, чи кирлĕ металлсем, çавăн пекех хими таварĕсем нумай.

(ТАСС).

Пĕтĕм тĕнчери халăхсем Чехословаки халăхĕпе пĕр шухăшлă

ПРАГА, çеҥтаберĕн 24 мĕш (ТАСС). Президент Бенеш, премйер-министр Сыровы йачĕпе, редакцисен тата Чехословакири общĕствăллă организацисен йачĕпе Англирен, Францирен, Румынирен, Йугославирен тата ытти çĕршывсенчен те пиншер çырусем пыраççĕ. Вăл çырусенче мĕнпур çĕршывсенчи мĕлйуншар граждансем Чехословаки халăхĕпе, ал ла хĕçпăшал тытса, хăйĕн никама пăхăнмасăр пурăнас ирĕкне хўтлекен халăхпа пĕр шухăшлă пулнине кăтартса параççĕ.

Пиншер рабочисемпе хресченсем, пуринчен ытла Йугославири рабочисемпе хресченсем, фашисла вăрçă чĕртекенсене хирĕç пĕр пулса кĕрешме Чехословаки çарне тăма ирĕк пама ыйтаççĕ.

Англире Чемберлен политикине хирĕç протеслес йухăм саралса пыраҍ

Англире Чемберлен политикине хирĕç протеслес йухăм ўссех пыраҍ. Рабочисем коллективлăн протеслесе çырнă çырусем Англи çĕршывĕн пур кĕтесĕнчен те пыраççĕ. Чемберлен политикине хирĕç протеслекен резолҍуцисем Шеффилҍд хулинчи профсойузсен совечĕ, Бирмингам хулинчи машиностройени работникĕсен профсойузĕ, Армстронг фирмин çар предприйатийĕсенчен пĕринче ĕçлекен рабочисем тата ытти коллективсем те йышăннă. Иртнĕ ерне хушшинче лейбористла парти Англи çĕршывĕ тăрăх пурĕ икĕ пин митинг туса иртернĕ. Вăл митингсене Чемберлен политикине хирĕç протеслесе тунă. Çеҥтаберĕн 24 мĕшĕнче темиçе делегаци Англи правительствине протессем пана, унта „Чехословаки тĕлĕшпе правительствăн предательле политикине хирĕç" протесленĕ.

Англири çамрăксен мире хўтлес тĕлĕшпе ĕçлекен комитечĕн депутацийĕ Англин демократилĕ ытти государствăсемпе пĕрле, Чехословаки хутне кĕмеле тесе ыйтнă. Депутаци çапла пĕлтернĕ: агресçине хирĕç тăрас политикăна тытса пырсан çеç çамрăксем вăрçăра хутшăнма тата унта хăйсен мĕнпур вăйне хума хатĕр,—тенĕ. Авиаци министерствин çĕнĕ çуртне тунă çĕрте ĕçлекен икĕ пин рабочи депутацийĕ Чемберлена отставкăна тухма ыйтса йышăннă резолҍуцине тăратнă.

Çеҥтаберĕн 24-мĕшĕнче Лондонра парламентăн ватăр членĕсен—консерватăрсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Канашлу йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Галифакс патне çыру йама йышăннă. Вăл çырура: Гитлĕра татах мĕнле те пулин уступкăсем памала тусан йе Чехословакирен мĕнле те пулин çĕнĕ парне кўме ыйтаççĕ пулсан, общинăсен палатинче Чехословаки ыйтăвĕ пирки пыракан прениссенче епĕр правительствăна хирĕç сасăлатпăр,—тесе асăрхаттарнă.

(ТАСС).

Хроникă

** Чехословаки правительстви пĕтĕм çĕршыв тăрăх мобилизаци тăвасси çинчен приказ кăларнă хыççăн, Берлинри биржăра акцисен курсĕ 5 пункт ўкнĕ.

** Полҍшари пичет пĕлтернĕ тăрăх, çеҥтаберĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа Полҍшăпа Чехословаки хушшинче чукунçул çыхăнăвне пĕтĕмпех чарса лартнă.

** Гитлĕр хĕрарăмсем валҍҍи Германире татах 500 „ĕçлев повиннăçĕн лагерĕсем" организацилене.

(ТАСС).

Йапонĕцсем вĕлерекен газсемпе усă курма чарăнмаççĕ

Китайăн Лигă нацинчи пĕрремĕш делегачĕ Веллингтон Ку Лигăн генералҍнăй секретарне нота панă, унта—йапонĕцсем Центрти Китай фрончĕсенче вĕлерекен газсемпе çĕнĕрен усă курни çинчен пĕлтернĕ.

Çеҥтаберĕн 19-мĕшĕнче,—тенĕ нотăра,—Йапонин тăвата самолҍочĕ Жуйчанран кăнтăр хĕвеланăçнеле наступлени туса пыракан Китай çарĕсем çине газлă бомбăсем пăрахнă. Уцçашанҍре йапонĕцсем вĕлерекен газсемпе усă курса Китай çарĕсен атакине сирме хăтланнă. Хенаҥ провинцин кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнче Чуканпу çине наступлени тунă чухне йапонĕцсем химилĕ снарйадсемпе усă курнă.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăçри фронтра пăлхавçăсем, артиллери тата 250 самолҍот хўтлесе пынипе, çеҥтаберĕн 24-мĕшĕнче пĕр кун кунĕпех Ебро йуханшывĕ патĕнче республиканĕцсен позицийĕсем çине атакăланă. Республиканĕцсем калама çук хыттăн тăрса вăрçнă пирки фашиссем ним чухлĕ те малала кайма пултарайман.

Сывлăшри çапăçура республиканĕцсем фашиссен 4 самолҍотне персе антарнă.

Левант фронтĕнче республикă çарĕсем Фуенте де Гарабайа тата Мансанер патĕнчи икĕ высотана тытса илнĕ.

Центрти фронтра фашиссем, Пуерто çине, Мадридран çурçĕр-хĕвеланăç йеннеле, атака тунă. Анчах та республиканĕцсем фашиссен атакине йалтах аркатса тăкнă.

Фронтăн Естремадурă участкинче, Еспиелҍ районĕнче пăлхавçăсем йулашки çапăçусенче вĕсенчен тытса илнĕ позицисем çине пилĕк хутчен контратакă тунă. Республиканĕцсем пăлхавçăсен контратакисене пурне те сирсе пăрахнă.

(ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

** Çеҥтаберĕн 24-мĕшĕнче Тбилисире йурăсемпе ташăсен республикăри пиллĕкĕмĕш олимпиади пĕтнĕ. Çак талантсен смотрĕнче грузинсен халăх искусствин представителĕсем 1500 çын пулнă.

** Свердловск облăçĕнче сивĕ çанталăк тăма пуçланă. Çеҥтаберĕн 25-мĕшĕнче çĕрле Свердловскра тата облăçан ытти вырăнĕсенче малтанхи йур çунă. Çунă йур хулăмĕшĕ 5 сантиметра çитет.

(ТАСС).

Мускав—Инçет-Хĕвелтухăçĕ

Хĕрарăмсен екипажĕ „Родина" самолҍотпа ниçта анса лармасăр вĕçни

1938 çулти çеҥтаберĕн 24-мĕшĕнче Мускав вăхăчĕпе ирхине 8 сехет те 12 минутра пĕтĕм çĕршывĕпе паллă лҍотчица-орденоносĕцсем: Валентинă Степанăвнă Гризодубăвă, капитан Полинă Денисăвнă Осипенко тата аслă лейтенант Марин Михайлăвнă Расковă (штурман) икĕ моторлă самолҍотпа Мускавран ниçта анса лармасăр Инçет-Хевелтухăçне вĕçсе тухса кайнă.

Самолҍот Мускав çывăхĕнчи Щелковски аеродромран вĕçсе хăпарса кайнă. Старт панă çĕрте Оборонă промышлĕннăç Халăх Комиссарĕ М. М. Каганович йулташ, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн Сывлăшри вăйĕсен начаҍникĕ—иккĕмĕш рангри командарм А. Д. Локтионăв йулташ, Оборонă промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕн Тĕп Управленин начаҍникĕ С. И. Беҍайкин йулташ, Граждăнла флотăн Тĕп Управленин начаҍникĕн заместителĕ М. Ф. Картушĕв йулташ, самолҍот конструктăрĕ П. О. Сухой йулташ тата Мускаври хаçатсен представителĕсем пулнă.

Сводкăсем тăрăх çакă курăнаҍ: çеҥтаберĕн 24-мĕшĕнче Мускав вăхăчĕпе каçхине 6 сехет тĕлне самолҍот Мускăвран 2.800 километр хушăра вĕçнĕ.

(ТАСС).

„Родина" самолҍот вĕçевĕ çинчен

Çеҥтаберĕн 24-мĕшĕнче кунĕпех вĕçев Штабĕ „Родина" самолҍотпа тăтăшах радиоçыхăну тытса пынă.

17 сехет те 24 минутра самолҍот, 5.000 метр çўлĕшре пулнă чухне, радиопа хăйĕн координачĕсене пĕлтернĕ (Каргат хули), малала вара вăл вĕçев мĕнле иртсе пыни çинчен çведĕнисем йĕркелĕ парса тăнă. Вĕçев ăнăçлă иртсе пынă.

Çакăн хыççăн самолҍот йурпа çăмăр хутăшлă зонăна кĕнĕ. Малала маршрут Байкал кўлли патне çитиччен питĕ йăвăр метеорологи условисенче иртсе пынă, самолҍотпа радиоçыхăну тытасси те йĕркерен тухнă пулнă. Байкалран хĕвелтухăçнеле ирхине çанталăк лайăхланса çитнĕ. Çеҥтаберĕн 25-мĕшĕнче Мускав вăхăчĕпе 6 сехет те 05 минутра тата 6 сехет те 53 минутра самолҍот çинчен икĕ радиограммă илнĕ, унта—самолҍот хăш вырăнта вĕçнине пĕлме пеленгисем пама ыйтнă. Çакăн хыççăн самолҍотпа çыхăну тытасси пĕтсе ларнă. Самолҍот ăçта анса ларни паллă мар. Сăмахсем тытас шутпа ефира тăтăшах радиопа тĕрĕслеççĕ тата самолҍота шыраççĕ.

(ТАСС).

КИНО

„Профессор Мамлок"

Филҍм фашисăмăн ирсĕрлĕхне, киревсĕрлĕхне, фашиссен бандитла сăнне тĕрĕс, художĕствăллă ĕнентермеле кăтартаҍ.

Филҍмри герой—профессăр Мамлок. Артист орденоносец С. Межинский кинокартинăра пĕрремĕш хут выҍаҍ пулсан та, пысăк маçтăрлăхпа выҍаҍ. Петр I—Симонăв, Чапайĕв—Бабочкин, профессăр Полежайĕв—Черкасăв речĕсене Межинский хăйуллăн тăраҍ. Межинский—мĕлйун çынсем йуратакан артист, вăл профессăр ролĕнче лайăх, уççăн, вăйлăн выҍаҍ.

Филҍма совет кинорежиссĕрĕсем Адолҍф Минкинпа Герберт Раппопорт тунă. Филҍм содержанине нимĕç писателĕ Фридрих Волҍф çырнă произведени тăрăх тунă.

...Германи. 1933 çул. Пĕтĕм çĕршыв пулас суйлавсене хатĕрленет. Фашиссем коммуниссене пухусем, митингсем иртерме чăрмантараççĕ. Вĕсем коммуниссене, рабочисене хĕнеççĕ, асаплантараççĕ. Пысăк учонăй, чаплă профессăр Мамлок политикăпа интересленмест. Вăл—профессăр, вăл етемлĕхе аслăлăх урлă çеç усă пама шутлаҍ. Професcăр ĕçлекен клиникăра та, унăн килĕнче те çынсем политикăлă кĕрешĕве хутшăнаççĕ. Мамлок ывăлĕ—çамрăк учонăй, коммунист. Профессăр ассистенчĕ доктăр Гелҍбах—фашист. Профессăр нимĕн те курасшăн мар, итлесшĕн мар. Унăн шучĕпе клиникăра „чирлĕ çынсемне врачсем, врачсемпе чырлĕ çынсем" çеç пулмала. Вăл ывăлĕ коммунист пулнине пĕлсен, хĕрсе кайсах ывăлне ăнлантараҍ, йаланаҍ. Вăл ывăлне кабинетран кăларасшăн мар, политикăна пăрахма йаланаҍ. Коммунист Ролҍф, Германи халăхĕн чăнчăн ывăлĕ, ашшĕ хыççăн каймасҍ. Вăл килĕнчен урама, рабочисем патне кайаҍ.

Профессăр хватерте радио итлет. Фашиссем рейхстага коммуниссем çунтарса йанă, тесе пĕлтереççĕ. Профессăр ĕненет.

Фашиссем влаçа алла илеççĕ. Фашиссем хăйсен тискер ĕçне татах вăйлатаççĕ. Пиншер коммуниссене, рабочисене тĕрмене хупаççĕ, урамра фронтовиксем пĕрмай йытă пек чупса çўреççĕ. Хватерсене кĕрсе ухтараççĕ, хĕрарăмсене, ачасене мăкăртаççĕ.

Клиникăра профессăр йăвăр операци тăваҍ. Фашиссен комиссарĕ фронтовиксемпе пўлĕме кĕрет. Комиссар профессăра клиникăран хăвалаҍ. Ăна хĕнеççĕ,—унтан мăшкăлаççĕ, кăкăрĕ çине „йеврей" тесе çырса урампа илсе каяççĕ.

Киле таврăнсан, вăл вилме тăраҍ. Профессăр Мамлок—Германи патриочĕ, вăл йураҍаҍ Германине. Империалисăм вăрçинче вăл Германишĕн йун тăкнă. Верден çывăхĕнче тăшманпа паттăрăн çапăçнăшăн ăна йат çырнă пашал панă пулнă.

Профессăр йулашки сăмахсем çыраҍ. Çав вăхăтра унăн хватерне штурмовик кĕрет. Вăл йăпăлтатаҍ, тархаслаҍ. Клиникăра фашиссен аманнă руководителĕ выртаҍ. Вăл профессăр Мамлок пулăшăвне çеç йышăнаҍ. Профессăр—вăл врач. Вăл çынна хĕрхенет. Фашиса мар, çынна вăл чĕртет.

Операци пĕтсенех, ăна каллĕх клиникăран хăвалаççĕ. Вăл коридорта Германишĕн паттăрăн çапăçса илнĕ пăшалпа хăйне хăй персе. Ăна клиникăна хăвараççĕ. Ролҍф хĕрĕ Ролҍфă профессăра йăлатаҍ, ăна лайăх пăхаҍ.

Ролҍфа хупаççĕ, асаплантараççĕ, хĕнеççĕ, коммуниссем тĕрмери йулташсене тартаççĕ.

Ролҍф ашшĕ патĕнче. Ролҍфă пулăшнипе ывăлĕпе ашшĕ калаçаççĕ. Профессăр халĕ пĕтĕмпех коммуниссен йенче, вăл ывăлне ĕненет, уншăн хĕпĕртет.

Комиссар тĕрмерен тарнине илтсен, ухтару тăваҍ. Ролҍфă ун çинчен профессăрпа ывăлне пĕлтерет. Ролҍф тарма тараҍ. Коридорта вăл фашис-комиссара кураҍ. Комиссар перет, тив ртеймест. Урамра Ролҍфă фашиса вĕлерет. Вĕсем иккĕше те халăх пулăшнипе пысăк пўрте тарса ўкеççĕ.

Професcăр Мамлок урамри халăха, хĕçпăшалла фашиссене кураҍ. Вăл балкон çине тухса тăраҍ. Профессăр хĕрўлĕ сăмах калаҍ. Вăл фашисăм ирсĕрлĕхĕ, йувăлăхĕ, киревсĕрлĕхĕ çинчен калаҍ. Вăл калама çук чаплă учонăйсен, философсен, писателсен, поетсен кĕнекисене çунтарни çинчен калаҍ. Урамра халăх итлет. Çўлти хутра Ролҍф та Ролҍфă итлеççĕ.

Фашис пулемечĕ профессăра каласни тăваҍ. Паллă профессăр ўкет, унăн чĕри, аслă пуçĕ ĕçлеме чарăнаҍ.

Профессăр Мамлок трагедийĕ—вăл пĕр çын трагедийĕ çеç мар. Вăл пĕтĕм Германи, пĕтĕм фашисăм трагедийĕ. Фашисăм вăл—вăрçă, вăл чарвăрсен хĕçпăшалĕ.

Кинофилҍм совет халăхне, пуринчен ытла капиталисла патшалăхĕнчи ĕçхалăхне фашисăма тата вăйларах курайми тăваҍ, коммуниссен хĕрлĕ йалавĕ айне тăма чĕнет.

Йев. Йени.

Ĕçлемен кулҍтработник

(Рабочи çырăвĕ)

Шупашкарти „Крестьянин" савăтра рабочисене кулҍтурăллă канма майсем туса паман. Клуб йалланах хупă тăраҍ, кĕнеке-хаçатсем, шашкă-шахмăтсем çук. Калаçусем, лекцисем туса памаççĕ Кружоксем те ĕçлемеççĕ. Çавна пула рабочисем ĕç хыççăн ăçта кирлĕ унталла сапăнаççĕ.

Савăтра кулҍтработник пур. Анчах мĕншĕн ăна шалу укçи тўлеснине епĕр пĕлместпĕр. Кулҍтработник Çидăрăв нихăçан та рабочисем хушшинче пулмасҍ, вĕсемпе калаçмасҍ. Ĕçлес вырăнне ĕçсе ўсĕрĕлсе кăна çўрет.

М. И. М.

Екран çинче епĕр мĕн куратпăр

Мускавра Потылихăра кунĕн-çĕрĕн хĕрўлĕ ĕç вĕрет. Кунта, сатсемпе хурăнлă вăрмансем хушшинче „Мосфилҍм" студийĕн павилйонĕсем вырнаçнă. Пит те пысăк кинохапрăкĕвче, тĕнчипе чи малта пыракансенчен пĕринче, икĕ пин йахăв çын ĕçлет.

Кăçал „Мосфилҍм" историлĕ манументлă тăватă филҍм тăвас тĕлĕшпе ĕçлет: Ленин çинчен иккĕмĕш çерине, „Александр Невский", „Степан Разин" тата „Минин и Пожарский" филҍмсене ўкерет.

Ленин çинчен иккĕмĕш çерине ўкерме хатĕрлевеççĕ. А. Каплер драматург-орденоносĕц çырнă филҍм сценарийĕнче 1918 çулта пулнă ĕçе кăтартнă. Филҍмри геройсем — Ленинпа Сталин. Халăх ку филҍмра шиксĕр Феликс Дзержинскине, Я. М. Свердлова, К. Е. Ворошилăва, А. М. Горькине, Царицын патĕнчи çапăçусене, халăх тăшманĕсем Ленина ирсĕррĕн вĕлерме тăнине курĕ. Филҍм Ленин сывалнипе, Илйич фронтран Мускава пынă Сталинпа савăнăçлă тĕл пулнипе вĕçленет.

Царицынри çапăçусен епизочĕсене Мускавра Потылихăра ўкереççĕ. Ўкермели вырăнта окопсем чавма пуçланă тата Царицын панорамине тума хатĕрлевеççĕ. Косҍумсем çĕлесе хатĕрлеççĕ.

Вăл филҍма çеҥтабер уйăхĕнче ўкерме тытăнаççĕ. Филҍм 1939 çулхи Ленин кунĕсем тĕлне хатĕр пулаҍ.

„Александр Невский" филҍма виççĕмĕш уйăх ўкереççĕ ĕнтĕ. Совет кинематографии историнче вăл чи пысăк постановкăсенчен пĕри пулаҍ. Ăна валҍҍи 25 пысăк декораци хатĕрлеме пулнă: вĕсенчен чи пысăки — XIII-мĕш ĕмĕрти Новгород—плошчăдсемлĕ, чиркўсемлĕ, Волхов урлă каçакан кĕперлĕ пысăк хула. Пăр çинчи çапăçăва ўкерме 30 пин тăваткăл метр плошчĕт çине Чудски кўллин кăткăс декорацине йатарласа шăнтса пăрлантарса тунă. Çапăçу сценинче валҍакансем валҍҍи 1950 плашч, кĕрĕк тата сăхман, 125 кĕпе-йĕм, 1700 мăшăр атă-пушмак çĕленĕ, темиçе пин шлҍом, сăнă, шчит, пуртă тата кинжал туса хатĕрленĕ.

„Александр Невский" филҍма ўкерсе çитереççĕ. Массăллă сценăсене пурне те ўкерсе пĕтернĕ. Вĕçленекен епизода та, Александр Невский тăшмансене çĕнтерне хыççăн Пскова пырса кĕнине те ўкернĕ.

Прокофйĕв копозитăр филҍм валҍҍи музыкă çырнă.

Филҍма ўкерекен коллектив вăл филҍма Октаберти Социалисăмла Аслă револҍуци 21 çул тултарнă тĕле ўкерсе пĕтерме хăй çине обйазательствă илнĕ.

Чапыгин писателĕн „Степан Разин" йатлă роман мотивĕ тăрăх „Степан Разин" картинăн сценарине çырнă. Филҍм — пусмăрлакан бойарсене тата крепăслă дворйансене хирĕç пулнă халăх йухăмĕ çинчен каласа параҍ. Картинă геройĕ—нумай йурăсенче йурланă—Дон ирĕклĕхĕн вожакĕ казак Степан Разин.

Филҍм валҍҍи Атăл çинче чылай сценăсене: Разин патша карапĕсен караванĕсем çине тапăннине т. ыт. те ўкерсе илнĕ. Халĕ Хура тинĕс çыранĕ хĕрринче, Одесă çывăхĕнче укреплени тунă Черкасск хулине тата Степан Разин туртса илнĕ ĕлĕкхи Астрăхăне тăваççĕ. Кунта „Мосфилҍм" експедицийĕ „Симбирск патĕнчи çапăçу" йатлă массăллă пысăк сценăна ўкерме тухса кайаҍ.

„Минин и Пожарский" йатлă историлĕ илемлĕ филҍмăн сценарине те çырса пĕтереççĕ. Филҍм вырăс халăхĕ йут çĕршыв захватчикĕсене (XVII-мĕш ĕмĕрти Полҍшă интервенцийĕ) хирĕç кĕрешнине кăтартса параҍ. Ку филҍма йатарласа уйăрнă творчĕствăллă ушкăн ўкерет. Вăл ушкăнта Пудовкин режиссор-орденоносĕц, Доллер режиссор, Шкловский писатĕл тата XVII-мĕш ĕмĕрти вырăс историйĕ тăрăх консулҍтант-специалиссем—Лебĕдĕвпа Пичета професcăрсем пур.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи кинематографи ĕçĕсен комитечĕ „Мосфилҍм" студине совет оператăрĕсем Макçейĕвпа Кармен Испанире ўкерсе илнĕ пит те паха документ плҍонкă панă. Ку плҍонкă — фашисла интервентсем Испанире тунă варвăрла ĕçĕсене никам сирсе пăрахайми ĕнентерекенсер, çав вăхăтрах республикă бойецĕсен иксĕлми паттăрлăхĕ çинчен калакан поемă. Ку плҍонкăна документлă илемлĕ пысăк филҍм тăваççĕ. Филҍм автăрĕсем—Михаил Колҍцов, Есфирь Шуб режиссор тата Кармен оператăр. Текстне Михаил Колҍцов çыраҍ.

Фашисăма хирĕçле паллă писателĕн—Лион Фейхтвангерăн романĕ тăрăх „Семья Оппегейм" йатлă сценари çырнă. Ку картина çитес кунсенчех ўкерсе çитереççĕ.

„Мосфилҍмăн" йатарласа тунă лабораторисенче Мускаври Хĕрлĕ плошчĕтре пулса иртнĕ физкулҍтурă парадне ўкернĕ документлă филҍма улăштарса тĕслĕ (цветной) филҍм тăваççĕ. Ку вăл тĕслĕ филҍм циклĕнчен „Счастливая родина" йатлă пĕрремĕш филҍм, ăна тăвассипе Г. Александрăв режиссор орденоносĕц тата РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем—И. Дунайевский композитăр орденоносĕц, В. Лебĕдĕв-Кумач поет-ордевоносĕц йертсе пыракан пысăк коллектив ĕçлет.

Совет ачисем валҍҍи „Мосфилҍм" А. Толстойăн „Золотой ключик" йатлă паллă повĕçĕ тăрăх йывăç çын Буратино темтепĕр курса çўрени çинчен илĕртўлĕ йумах хатĕрлет. Сценари автăрĕ А. Толстой. „Золотой ключик" филҍмра чĕрĕ акторсемсĕр пуçне пукансем выҍаççĕ. „Золотой ключик" филҍмăн режиссорĕ—„Новый Гулливер" йатлă пукане филҍмăна лартаканĕ—А. Птушко.

Студин монтаж тăвакан цехĕнче икĕ филҍм: Германи фашисăмĕпе кĕрешекен паттăр борец çинчен, Германири мухтавлă коммуниссен партин вăрттăн ĕçĕ çинчен „Лагерь на болоте" тата чукунçул транспăрчĕ çинчен „Честь" йатлă филҍмсене ўкерсе çитереççĕ. Кунçăр пуçне „Мосфилҍм" виçĕ комеди: „Полюшко-поле", „Девушка с характером" тата „Веселая Москва" ўкерет.

„Полюшко-поле" комеди—совет çамрăкĕсен пурнăçĕнчен илсе ўкернĕскер. Комеди геройĕсем—тракторисcем, комбайнерсем, Хĕрлĕ Çартан таврăннă танкист, социалисăмлă уйхирсен ударникĕсем. Натурлă сйомкăсене Украинă СС Республикинчи чи лайăх ĕçлекен МТС-сенчен пĕринче — Гурйевски МТС-ра (Николайĕв хули çывăхĕнче) ўкереççĕ. Комедийе „Богатая невеста" филҍма укернĕ коллектив ўкерет.

Иккĕмĕш комедин — Валентинă Хетагурăвă чĕннипе çыхăннă çамрăк патриоткăсен йухăмĕ. Комеди геройĕ — Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи „характĕрлĕ хĕр". Хăйулăхпа паттăрлăх, тăван çĕршыва тата крайа йуратни—çавăн пек вăл геройнҍăн сăн-сăпачĕ.

„Веселая Москва" комедийе те ўкереççĕ. Ку филҍм социалисăмлă столицăна, Мускав ыран мĕнле пулассине кăтартаҍ. Унта ансăр урамсем вырăнне чаплă проспектсем пулаççĕ, Сталинла епохăри Советсен дворецĕ пек пит те пысăк сооруженисем т. ыт. те ўссе лараççĕ.

Филҍм теми — совет çамрăкĕсен телейлĕ пурнăçĕ, вĕсем тăван çĕршыва чĕререн йуратни.

Комедире кулмали вырăнсем нумай: художник ĕлĕкхи Мускава ўкерет, анчах ĕлĕкхи пĕчĕк çуртсем тата чиркўсем художник кисчĕ пир çине ўкерме ĕлкĕриччĕнех пĕтсе лараççĕ. Мускава пĕр карчăк пынă. Вăл хăйне кирлĕ пĕр çурта шыраса тупаҍ. Анчах вăл çав çурт патне пырса çитсенех, пўрт вырăнтан тапранса йеррипенех куçса кайаҍ...

Комедин мĕн пур трўклă кадрĕсене те çĕнĕ, пит те йăвăр метăлпа ўкернĕ.

(ТАСС).

Ответлă редактăр И. М. ÇЕМЕНĂВ

„Чăваш Коммунĕ" сырăнса илме хаксем: пĕр уйăха 2 т. 50 пус. 3 уйăха 7 т. 50 п., 6 уйăха 15 т., ... 30 тенкĕ. Почтăсемпе сыхăну уйрăмĕсем, письмоносецсем йышăнаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 504 Гор. Чебоксары, типография № 1 заказ № 711, ф. Б. 88×84 ...